К83.3Э(=Чув)6-8
Ц 97
Ч-41377

ВАСИЛИЙ ЦЫФАРКИН

# ЮРӐПА ЭП ПУРНӐҪА ЮРАТРӐМ

*В.А. Урташ
пурнӑҫӗпе пултарулӑхӗ*



Национальная библиотека ЧР
4-041377

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

К

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

«ТĂХĂРЪЯЛ»
халăхне,
унăн
аваллăхне,
паянлăхпа
малашлăхне
халаллатăп

*В. Цыфаркин*

кр.



В.А.Урташ

К83.39(=чув)6-
К
Ц97

Василий Цыфаркин

# ЮРĂПА ЭП ПУРНĂÇА ЮРАТРĂМ

В.А.Урташ
пурнăçĕпе пултарулăхĕ

Элшел - Шупашкар
2007

К92.38(Чув)6
Ц 97

УДК 821.512.111
ББК 84 (2Рос=Чув)-6
Ц 97

Цыфаркин В.Е. Юрăпа эп пурнăçа юратрăм: Тĕрленчĕксем. - Элшел, Шупашкар, 2007. - 74 с.

Кĕнекене Тăхăрьял шăпчăкĕ Валентин Урташ пурнăçĕпе пултарулăхне çутатакан тĕрленчĕксене кĕртнĕ. Автор паллă сăвăç-юрăç ăсталăхĕн вăрттăнлăхне уçса кăтартма тăрăшнă. Кăларăм тăван сăмаха юратакансене, вĕренекенсемпе вĕрентекенсене кирлĕ пуласса шанас килет.

Ч-41377
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

ПРОВЕРЕНО
2 МАР 2017

© Цыфаркин В.Е., 2007

## Пултарупа хавхалану ҫăлкуҫĕ
(Умсăмах вырăнне)

«... Элшелсем кĕвĕ каланă ҫĕрте кĕвĕ сăмахĕсене питех улăштарсах каймаҫҫĕ: ҫав сăмахсенех калаҫҫĕ. Анчах леш кĕввине вара, епле сăвăпа калас тенĕ, ҫапла улăштараҫҫĕ. Пĕрех вăйăра темиҫе сăвăпа калаҫҫĕ. Мĕн авалтан пыракан сăвви, пĕчĕкҫи-пысăкки пĕлекен сăвви, каланă ҫĕрте иккĕ кăна. Вĕсене пит илемлĕ те пĕлсе калаҫҫĕ. Унта вара ыттине ҫурри калать, ҫурри вĕренеймесĕрех юлать - ҫаплипех иртсе каять вара вăл. Ун пек пĕлнĕ-пĕлмен сăвăсем ҫулленех иккĕ-виҫҫĕ те пулаҫҫĕ: кăҫал пĕр йышши, тепĕр ҫул тепĕр йышши. Таҫтан-таҫтан илтсе вĕренсе килеҫҫĕ те ăна юрласа параҫҫĕ. Пайтахăшĕ вĕренсе юлать вара: эртипеле калакалаҫҫĕ. Кĕвĕ каланă чухне вара тата ҫаврака карталанса кăна тăмаҫҫĕ: темиҫе тĕслĕ хутлăн-хутлăн пулса та калаҫҫĕ... Ҫапла карталанса ҫаврăннă ҫĕртенех ытла ҫын нумай пулсан, пĕр тĕлтен татăлаҫҫĕ те ик-виҫ хутлăн туса кĕрсе ҫавăрăнаҫҫĕ. Унтан пĕр-пĕр тĕлтен ҫав ик-виҫ хут картана тытса алăк пек туса тухаҫҫĕ те, татах ҫавăрăна-ҫавăрăна, ĕлĕкхи пысăк картанах туса хураҫҫĕ. Хăш чухне мĕн пирки те пулин, вырсарникунлă-мĕнлĕ е ытти праҫник кунĕ ик-виҫ ял пĕрле пухăнать. Ҫавăн пек чухне ҫынни нумай пулать те, ун пек ҫĕрте вăйă картине темиҫе хутлă та тăва-тăва илеҫҫĕ. Пĕр уяв вăхăчĕ иртсен, хĕрсем-каччăсем нихăҫан та ахаль ҫӳремеҫҫĕ вара, ăҫта пынă унта кĕвĕ калаҫҫĕ: туй-мĕн кураҫҫĕ-и, тутар вăйййи курма каяҫҫĕ-и, вырсарникун ахаль урама тухаҫҫĕ-и - ялан алăран алла тытăҫса хĕри-пăраҫ кĕвĕ каласа ҫӳреҫҫĕ. Каччăсем вара вĕсен хушшине кĕре-кĕре тăраҫҫĕ.

Эрнекунпа вырсарникун хĕрсем шурă кĕпе тăхăнса, тухъя-тенкĕ тăхăнса-ҫакса «уяв» тăваҫҫĕ. Кăнтăрла тĕлне ҫапла шап-шурă та ҫап-ҫутă тумланса тухаҫҫĕ те, урам тăрăх кĕвĕ каласа ҫӳреҫҫĕ. Ăҫта тăкăрлăк тĕлне-мĕне ҫереме ҫитсен, чарăнса каҫхинехи пек кĕвĕ каласа тăраҫҫĕ. Калаҫҫĕ-калаҫҫĕ те малалла утаҫҫĕ. Унтан хире те каяҫҫĕ, хуран хăлăп лапписенелле Раккасси хĕрĕсемпе пĕр тĕле пуҫтарăнса калама тухаҫҫĕ. Лешсем те унта пыраҫҫĕ вара».

*Г.Т. Тимофеев «Тăхăръял», 2002 ҫ., 161 с.*

## В. Урташ автобиографийĕ

Эпĕ, Яковлев Валентин Андреевич, Тутар АССРĕнчи Пăва районне кĕрекен Раккасси ялĕнче 1924 çулхи декабрĕн 24-мĕшĕнче хресчен çемйинче çуралнă.

Атте - Яковлев Андрей Степанович.

Анне - Яковлева Евдокия Сергеевна.

1931 - 1935 çулсенче ялти пуçламăш шкулта вĕреннĕ, унтан - юнашар Элшелти вăтам шкулта. Эпĕ çуралнă тăрăх Тăхăръял ятпа паллă. Ачаранпах тăван литературăна юратса ӳсрĕм. Уйрăмах хамăр янташ А.Д. Кăлкан-Санюк тете пултарулăхĕпе интересленеттĕм. Элшел шкулĕнче вĕреннĕ чухнех хаçатсенче заметкăсем, тĕрленчĕксем пичетлеттĕм. Хастар юнкор тесе хĕрлĕ кĕпе парса та чыс тунăччĕ мана.

Вăрçă тухсассăн 1941 çулхи декабрь уйăхĕнче хам ирĕкпе (вун çиччĕ те тултарайманччĕ) фронта тухса кайрăм. 1943 çулччėнех çапăçусенче пултăм. 1088 стрелковăй дивизире взвод командирĕн помощникĕ, рота старшини пулнă. Мартăн 15-мĕшĕнче Брянск облаçне кĕрекен Жиздра хули патĕнчи çапăçура, хамăн умра мина çурăлса кайнипе йывăр амантăм. Темиçе уйăх хушши сипленнĕ хыççăн инвалид пулса киле таврăнтăм. Пĕр вăхăт хушши Хусанта тухса тăракан «Хĕрлĕ ялав» хаçат редакцийĕнче ĕçлерĕм. Унтан Чăваш радио корреспонденчĕ пултăм. 1945 çулхи сентябрь уйăхĕнче Чăваш педагогика институтне вĕренме кĕтĕм. Пĕр çултанах, сывлăх япăхланнипе, вĕренĕве пăрахма тиврĕ. Кайран Горький ячĕпе хисепленекен литература институтĕнче заочно вĕренме хăтланса пăхрăм, куç чирĕ вăйланнипе вĕренесси пулмарĕ. 1946 çултанпа литература ĕçĕпе тата пенси укçипе пурăнатăп.

Литература ĕçне 1944 çултанпа туса пыратăп. Çичĕ кĕнеке кăлартăм. Вырăсларан, тутарларан куçаратăп.

Композиторсем инкçĕре яхăн сăввăма кĕвве хывреç. Çамрăксем юратакан произведенисем çырнăшăн 1948 çулта ВЛКСМ Чăваш обкомĕ «Хисеп грамоти» парса чыс турĕ.

*Валентин Урташ (Яковлев)*

*1970 çул*

*ЧНИИ архивĕ, у. 860.*

## Урташ ăраскалĕ

Сăвăç, çĕрĕпе тенĕ пек пĕчĕк пӳлĕмре сăмахсем суйласа ларнăскер, уçă сывлăшпа сывлама, кайăк юррине итлеме тесе урама тухнă. Ирĕ те, сăвăç чунлăскер, поэта тӳрех хăй ытамне çавăрса илнĕ: варкăш çилпе çупăрланă, хĕвел пайăркисемпе питрен ачашланă. Çăка çулçисем пăшăл пăтти пĕçернине итлесе çӳренĕ поэт, сип-симĕс курăк çинче сывлăмăн юлашки пĕрчисем çухалнине сăнанă...

Çак пĕчĕк ӳкерчĕкрех сăвăç сăнарĕ, пурнăç чăнлăхĕ палăрса тăрать. Турри панă çав Валентин Урташа çавăн пек çепĕç туйăм, вичкĕн куç. Анчах пурнăçĕнче унăн, тĕрĕссипе, йӳççи, синкерлĕ самантсем ытларах пулнă. Çапах та хăйне телейсĕр темен Урташ. «Эпĕ ăраскаллă», - тесе кăмăлне çĕкленĕ. Пурнăçăн кукрашки-макрашки шăпи урлă таптаса каççан та йăлтах хуçăлса ӳкмен, çĕкленнĕ те малаллах утнă. Сывлăхĕ хавшанă ĕнтĕ, çавăнпах - тăр, 49 çула çитеймесĕрех çут тĕнчерен уйрăлнă.

Валентин Урташ çуралса ӳснĕ Тăхăръял тавраш̆ĕ юрă-сăвăпа пуян. Кашни ялăнах хăйĕн сăвăçи, хăйĕн юрăçи, хăйĕн вăйăçи пулнă. И.Я.Яковлев 1880 çулта Чăваш Киштекĕ ял çывăхĕнчен иртсе кайнă чух курнă Тăхăръял вăййине Олимп вăййисен илемĕпе танлаштарнă:

«...Около деревни Кищаки Буинского уезда Симбирской губернии, верстах 50 от Симбирска … я увидел чувашский хоровод, следя за ним незаметно с 11 часов ночи до 3 часов утра. Молодежь, парни и девушки, построившись в две колонны, одна побольше, другая поменьше, стройно, красиво, с одушевленными песнями шли колоннами одна на другую, проходили насквозь, потом возвращались и опять шли друг на друга. Пение было прекрасное, танцы изящны». (И.Я.Яковлев. Воспоминания. - Ч., 1982). Тен, Тăхăръял таврашĕнче курса çӳренисем, илтнисем И.Я.Яковлева çак афоризмла сăмахсене калама та хавхалантарнă: «Чăвашăн - çĕр пин сăмах, çĕр пин тĕрĕ, çĕр пин юрă».

Тăхăръял сăвă-юрăпа, юмахпа, йăла-йĕркепе хăйне евĕрлĕ пулнине Г.Т.Тимофеев писатель-этнограф та асăрханă. Унăн «Тăхăръял» кĕнеки чăваш халăх пурнăçĕн энциклопедийĕ вырăннех çӳрет. Уçса пăхар-ха Ашмаринăн 17 томлă «Чăваш сăмахĕн кĕнекине»: Тăхăръял таврашĕнче çырса илнĕ мĕн чухлĕ сăмахлăх унта! Çапла, мĕн ачаранпах пуян тавралăхра ӳссе çитĕннĕ В. Урташ. Çывăх тăванĕсем юрра-ташша ăста пулни те ачана пултаруллă пулма хистенĕ пулĕ. Çивĕч ăс-тăнлă, ларма-тăма пĕлмен Валя юрăпа пĕчĕкренех туслă пулнине ăна çывăх пĕлекен çынсем каласа пани те çирĕплетет:

«Валя ача чухнех нумай сăвă-юрă пĕлетчĕ. Шкултан килетчĕ те пӳртре ĕнеркелесе çӳретчĕ, унтан тенкел çине тăрса юрласа та кăтартатчĕ. Аппăшĕсем юрра пуçăнсанах, Валя та вĕсенчен юлмастчĕ», - аса илет поэт амăшĕ Евдокия Сергеевна.

«Мана Раккасси ялĕнче пулма тӳр килнĕччĕ. Юлташсемпе пĕрле урампа иртсе пыруçăн çатан хыçне вĕт-шакăрсем пухăнса тăнине асăрхарăмăр - вĕсем пире вăрттăн сăнатчĕç. Пĕр йăрă ачи пуçне кăларнă та мана кăтартса: «Ав, çавă ĕнтĕ вăл Кăлкан сăвăç», - тет. Нумай çулсем иртсессĕн, Валентин Урташ çав тĕл-пулăва аса илтерчĕ. Кăлкан текенни эпĕ пулнă вăл, терĕ.

Валя ман пата килмессерен юрласа пама ыйтатчĕ, сĕрме купăс калаттаратчĕ. Шел, хам калаймастăп, - тетчĕ вăл, пиншакĕн пушă çаннине кăтартса». Александр Дмитриевич Кăлкан В.Урташ çинчен каласа пама питĕ юрататчĕ, сăвăç хăй алă пусса парнеленĕ кĕнекисемпе савăнатчĕ.Шел,Кăлкан та пирĕн хушăра çук ĕнтĕ.

Раккассинчен чылай аякра татăлса пурăннă пулин те сăвăç тăван кĕтесрен йăлтах уйрăлман. Май-саманчĕ килсе тухсанах, пуйăспа-тăк пуйăспа, машинăпа-тăк машинăпа, лавпа-тăк лавпа, ял-ял тăрăх çӳресе вулакансемпе тĕл пулнă, сăвă калană, сăвă çырнă. Тăван ялне чунтан юратнипе çуралнă та «Чăнлă» сăвă:

Кĕмĕл-ши эс, Раккасси,
Ылтăн-ши эс, Раккасси,

Хёртсе хёвел пăхнă чухне,
Ылтăн пуль эс, Раккасси,
Сăвă-ши эс, Раккасси,
Кěвě-ши эс, Раккасси,
Юррăмăрсем юхнă чухне
Юрă пуль эс, Раккасси.

Поэта мěн пěчěкренех пěлнě К.К.Петров писатель çапла аса илет: «Эпир унпа пěр енчисем, тăхăръялсем, Раккасси Пимěрсел ялěнчен улт-çич çухрăмра çеç. Ачаллах паллашнă, пěр-пěрин патěнче час-часах пулнă. Пионер чухнех райхаçата çырса тăнă. 1938 çулта ăна, çиччěмěш класра вěренекен вунтăваттăри юнкора, ялкорсен районти канашлăвěнче хěрлě кěпе, ручкăпа кăранташ тата блокнот парнеленěччě.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче тата та çирěпрех туслашрăмăр. Мана вăл пуçласа Шупашкара илсе килсе кăтартрě. Туслăха питě çӳле хуракан ырă кăмăллă çынччě вăл. «Укăлча умěнче» сăввинчи йěркене çине-çинех калама юрататчě: «Тусăм, эсě тусна, тусна аса ил!»

Халăх хушшинчен тухма пěлместчě Урташ. Сăвви-юррине те ытларах тěрлě çěре тӳлевсěр командировкăна тухса кайсан, е тăван ялěнче çыратчě. «Эп ялан çул çинче, çул çинче - çын çинче. Юррăмсем - сăввăмсем тус-йышсен килěнче. Эп çитмен вырăнсем чăвашра пит сахал, ăçта пыр - тăван ял. Çав-çавах тăван ял пуринчен хаклăрах».

Вăрçă нушине ытлашшипех курнă Урташ: çапăçу хирěнче хăй умěнче мина çурăлса кайнипе сулахай аллине, тепěрин пӳрнисене, хăрах куçне çухатнă. Çапла илемсěрленсе юлнă çамрăк тепěр чухне хăйне ютшăнарах тытнă та пуль. Ытла тӳррěн, кăнттамрах калаçнине, шухăрах пулнине кура ăна хăшě-пěри ăнланайман. Ăнланаканнисем Урташпа çывăхланнă, юлташланнă. Вěсемпе вăл ăраскаллă пулнă, хăйшěн пурнăç илемне тупнă. Чунěнчен шăранса тухакан кашни сăввах чěре тěпренчěкě вырăнне хунă та вěсем юрă пулса халăх патне çитнишěн тем пекех хěпěртенě.

Ан тив, ан пултăр мăшăр алă,
Çавах ĕç тупăп эп, аппа.
Тен, ĕçĕмпе те пулăп паллă,
Çаплах эп çӳрĕп ыр ятпа,

- тет вăл «Çыру çырмашкăн аллăм çуккă» сăввинче.

Пурнăç çулĕ пĕртте такăр пулман унăн, пултарулăхĕ те пĕр тикĕс аталанман. Пирвайхи кĕнеки «Çурхи кунсем» (1951) калавсен пуххи пулнă пулсан, ыттисем пурте - сăвăсем. Вĕсене вулакансем те, критиксем те тĕрлĕ йышăннă. Калавçă пулса пысăк йĕр хăвараймарĕ те, кам пĕлмест «Тавах, анне», «Укăлча умĕнче», «Шупашкарăн лăпкă каçĕсем» юрăсен авторне. Хăй калашлех:

Юрăпа эп пурнăçа юратрăм,
Юрăпа сыватрăм сурана.
Юрăпа эп ăраскал шăратрăм,
Юрăпа юратчăрччĕç мана.

К.К. Петров каласа панинчен: «Пит-куçне пăшал тарĕ ларса чăпарлатнă, темиçе çĕртен аманса пĕтнĕ пулин те, вăл чунĕпе хуçăлмастчĕ. Ĕçпе, юрăпа пусаратчĕ хăйĕн чĕрине. Пурнăç çине çутă шанчăкпа пăхатчĕ. Халăха, çĕршывăмăра, Чăваш ене, тăван ялне, ĕç паттăрĕсене мухтаса юрлатчĕ Урташ. Ун юррисенче шăпах ĕнтĕ чун тасалăхĕ палăратчĕ.

Хăйĕн юррисене Урташ артист пекех лайăх юрлатчĕ. Сасси унăн уçăччĕ, витĕмлĕччĕ. «Юрăçа вилĕм тивмест», тесе вăл питĕ тĕрĕс каларĕ. Унăн вилĕмĕ пурнăç тăсăмĕ пулчĕ, сăвви-юррисен çĕнĕ пулăмне çуратрĕ, вĕсене халăх юрри туса хучĕ.

Çапла, юрăçа вилĕм тивмест!»

Валентин Урташăн 200 яхăн сăввине кĕвве хывнă. Вĕсенчен чылайăшĕ халĕ те кивелмест: юррисем чăваш музыкин ылтăн фондне кĕрсе юлчĕç, сăввисем - литературăна. «Шупашкарăн лăпкă каçĕсем», «Ĕмĕтĕмĕр çитсе пынăран», «Шуршăл йăмрисем» тата ытти сăвви-юрри

халăх юратакан, халăх итлекен произведенисем пулса тăчĕç. Урташăн чылай сăввине шăпах кĕвĕ валли çырнă тейĕн. Шăнкăртатса юхакан сиплĕ çăл шывĕ пекех юхаççĕ çепĕç те ачаш сăвă йĕркисем. Вĕсене вуланăçемĕн вулас килет, юррисене итленĕçемĕн итлес килет. Халăх çав юрăсене Урташ юррисем тет. Халăхшăн çырса халăх юратăвне çĕнсе илнĕ поэта телейлĕ теççĕ. Телейлĕ пулнă Урташ. Çав телее вулакансене чун-чĕре ыйтнă сăвă-юрăсем парнелесе тупнă вăл.

Урташ - юрă сăввисен ăсти. Ку вăл пĕр çын шухăшĕ мар, поэта пĕлекенсен, унăн сăввисене юратакансен, композиторсен, тĕпчевçĕсен ырă шухăшĕ.

«Певучие стихи В. Урдаша сами просились в музыку, они сами могли бы существовать как песни, независимо от того, написана на них музыка или нет. Творческое использование приемов устно-поэтического фольклора, свежие, яркие жизненные образы, четкий ритм - положительные качества песенных текстов упомянутого автора» - тесе çырать В. Илюхин музыковед «Григорий Хирбю» ятлă кĕнекинче.

«Çук, унăн пĕрремĕш сăввиех («Тухăçран хăпарсан шурăмпуç») халăхра юрă пулса сарăлнăран мар. Çук, пирĕн композиторсем икçĕре яхăн сăввине юрра хывнăран та мар. Урташ чăннипех те юрăç пулнăран, пĕтĕм чун-чĕрипе, пĕтĕм хăйĕн пурнăçĕпе самана юрăçи пулнăран. Унăн мĕн пур произведенисенче - юррисенче, юрра хывман сăввисенче, поэмисенче, калавĕсенче - пысăк юрăç чунĕ витĕр шăранса тухнă чăн-чăн гражданла, патриотла поэзии тапса тăнăран юрăçă вăл», - тет Петĕр Львов писатель.

В. Урташ сăввисенчен чылайăшĕ халăх юратнă юрăсем пулса тăчĕç. Тĕслĕхрен, «Ĕмĕтĕмĕр çитсе пынăран» юрра илсе пăхар-ха. Тӳлеккĕн те мăнаçлăн юхать çав çемĕ. Çук, кĕвви илемлĕ пулнипе çеç мар, сăмахĕсем чун-чĕрене тыткăнлама пултарнипе те хитре çав юрă. Халăхăмăр чун-чĕрине вырнаçнă çак юрă. Вăл унăн савăнăçне, телейне пит лайăх сăнарлать. Каламалла ĕнтĕ, юрă авторĕсем (композиторĕ - Г. Хирпю) пĕр-пĕрне ăнланнă, çавăнпа паха произведенисем çырма пултарнă та.

Композиторсем В.Урташран куллен тенĕ пек çĕнĕ сăвăсем кĕтни куçкĕретех. Акă, илер-ха унăн «Тавах, анне» сăввине. Ăна Г.Хирпю, Г.Андреев, Н.Григорьев композиторсем юрра хывнă.

Тавах, анне, çуратнăшăн,
Юрла-юрла сиктернĕшĕн,
Лăпканăшăн, юратнăшăн,
Чĕкĕç чĕлхи пилленĕшĕн.

Тавах, анне, çуратнăшăн,
Ятла-ятла вĕрентнĕшĕн,
Ятланăшăн, юратнăшăн,
Шăпчăк юрри пилленĕшĕн.

Тавах, анне, çуратнăшăн,
Салху чухне хĕрхеннĕшĕн,
Хĕрхеннĕшĕн, юратнăшăн,
Чечек сăнне пилленĕшĕн.

Тавах, анне, çуратнăшăн,
Мăшăр çунат ӳстернĕшĕн.
Ӳстернĕшĕн, юратнăшăн,
Сӳнми телей пилленĕшĕн.

Пысăках та мар, тăватă çаврăмлă, 16 йĕркеллĕ, 42 сăмахлă сăвă. Анчах та çак сăвăра - ачалăх кунĕсем, анне утьăка сиктерни, ăс пани - вĕрентни, ӳстерсе çын туни, пĕтĕм пурнăç.

Валентин Урташ юррисем тĕлĕнмелле çепĕçлĕхпе, тапса тăракан вăйпа витерĕннĕ. Унăн поэзине çутçанталăк илемĕпе танлаштарма пулать. Вăл çурхи шыв пек хăватлăн хумлă-хумлă юхнăн та, шăнкăртатакан çăлкуç шывĕ пек те, çеçке ларнă çĕмĕрт евĕр те туйăнать. Унăн поэзинче Атăл хăвачĕ те, фабрикăсемпе заводсен шавĕ те, çамрăксен сасси те, ял çыннин ĕçĕ-хĕлĕпе шухăш-ĕмĕчĕ те пурри туйăнать.

В.Урташ чăваш композиторĕсемпе тачă çыхăнса ĕçленĕ. Çак çыхăну поэт мĕн çĕре кĕричченех пынă. Халĕ те Урташ сăввисене кĕвве хываççĕ, юрлаççĕ. Поэтпа пĕрле ĕçленĕ çынсенчен чи малтан Г. Хирпюне асăнмалла. Çакăн пирки Ю. Илюхин музыковед çапла çырать: «В подавляющем большинстве вокальных произведений на сельскую тематику композитор проявил умение создавать доходчивые мелодии, близкие национальному песенному складу. Благодаря этому его песни быстро запоминались и становились весьма популярными. Наиболее удачные из них связаны с поэзией В. Урдаша («Песня героев труда», «Крылатая душа», «Сбываются мечты», «Любимые поля»).

... Стихи В. Урдаша в сочетании с мелодией Г. Хирбю дали народу такую яркую песню, как «Ĕç геройĕсен юрри». Не менее повезло другой песне Хирбю на стихи Урдаша - «Ĕмĕтĕмĕр çитсе пынăран». По-настоящему крылатыми стали строки, повторяющиеся в каждой строфе: «Пĕр-пĕрне курсассăн тус-тăван, юрлама та савăнма аван».

Урташпа нумай çул хушши туслă пулнă, пĕрле сахал мар юрă çырнă А.Сергеев композитор аса илнинчен:

« ...Григорий Яковлевич (Хирпю) фортопьянăпа манăн кĕвве каласа пăхрĕ. Пĕр хут, икĕ хут... Унтан сасартăк:

«Вĕçтер Урташ патне», - терĕ. Хутпа кăранташ илчĕ те çапла çырчĕ: «Валентин! Сан патна Сергеев учителе яратăп. Юрă сăмахĕсене çырса пар. Кĕвви питĕ лайăх».

... Григорий Яковлевич ăнлантарса панипе Урташ хваттерне часах шыраса тупрăм.

- Эсир Урташ пулатăр-и? - тетĕп.

- Ĕненмесен, тытса пăхсам, - тавăрать ку.

Ман пирки йăлтах пĕлчĕ Валентин Андреевич. Унтан музыка пирки калаçу пуçларăмăр. Малтан Огинскин «Полонезне», унтан хамăн çĕнĕ кĕвве каласа пама ыйтрĕ. Кĕвĕ май хусканусем туса илчĕ. Тутисем сиккелерĕç.

- Ручка тытма виçĕ пӳрне юлнă-ха, терĕ те сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ. Çырнăçемĕн темиçе хутчен сике-сике илчĕ.

- Тепре кала-ха... Ăнлантăм. Юлашки куплечĕ акă çапла пулать. Итле!

Ай, тантăш-тусăмсем,
Шупашкарăн хĕрĕсем,
Эсир мар-и, эпир мар-и
Шупашкар илемĕсем?

Г. Хирпюпе эсĕллĕ пулни те, «ĕненмесен тытса пăхни» те, юрăлăха чунтан парăнни те - йăлт Урташла, уççăнлăх, тӳрĕлĕх, çивĕчлĕх, пуç пĕкменлĕх (йăпăлтатма пултарайманни), чăрсăрлăх - йăлт Урташла. Çавăнпах-и, Урташăн «хуть ăçта кайсан та пур тус-тăван». Халăхпа вăл яланах халăхла.

Çакна та каласа хăвармалла: В. Урташ сăввипе çырнă «Комсомол маршĕ» юрăшăн Г.Хирпю чăваш комсомолĕн Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ премине илме тивĕç пулнă. Ф. Лукина В. Урташ сăввисемпе кĕвĕленĕ юррисемшĕн СССР патшалăх премине панă. Юрă сăвăçи, шел, аяккинче тăрса юлнă.

В. Урташ сăввисем хăйсемех кĕвĕ ыйтни чăваш композиторĕсене илĕртнĕ. Тĕпчевçĕсем поэт пултарулăхĕ халăх сăмахлăхне çывăх тănине палăртаççĕ. Поэт ятарласа литература ăсталăхне вĕренмен, уншăн пултару шкулĕ - çутçанталăк панă талант тата халăх сăмахлăхне вĕренни пулнă. Фольклортан тĕслĕх илни, илемлĕх мелĕсемпе, импровизаципе вариаци мелĕсемпе ăнăçлă усă курни - çак енсем поэтăн творчестви халăх пултарулăхĕпе уйрăлми çыхăнса тăнине кăтартаççĕ.

«Валентин Урташ çырнă сăвă-юрăсем халăх хушшинче хăвăрт сарăлнин тĕп сăлтавĕсенчен пĕри - вĕсен мелодикипе ритмики халăх юрри-кĕввисене çывăх тăнинче. Поэт сăввиюррисен янравлăхне, хăватне, тарăн шухăшĕсене йĕркелесе пыракан дирижер вăл - пурнăç хăй», - тесе палăртнăччĕ Р.Чепунов.

В. Урташ пултарулăхĕ вăрçă хыççăнхи çулсенче аталаннă. Юрăсем валли сăвăсем çыракансенчен И.Тукташпа çывăх пулнă вăл, унпа пĕрле ĕçленĕ,канашланă. Тукташ, аслă юлташ пек пулса, В.Урташа чылаях пулăшнă.

В.Урташ талантлă сăвăç-юрăçне юрăсен хисепĕ те, вĕсене халăх юратни те, произведенисен илемлĕх шайĕ



НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
Чувашской Республики

çӳлте пулни те çирĕплетет. Поэт пултарулăхĕ çутçанталăк парни пулнине нумай тĕпчевçĕ палăртать. Юрă та сăвăç пурнăçĕнче паллă вырăн йышăннă, юрăпа вăл Тăван çĕршыв умĕнче ятлă-сумлă пулса тăчĕ.

Тăван çĕршыв, сана юратрăм
Мĕн пĕчĕкрен, мĕн ачаран.
Пĕр саншăн çеç юрра шăратрăм
Чун савнăран, чун туртнăран.

Тăван çĕршыв, сана юратрăм
Мĕн виличчен, куç сӳниччен.
Вилсен, юрра шанса хăварăп,
Вилсен те юрлăп сан çинчен.

Чăнах та çапла, сăвăç пурнăçран уйрăлнă пулсан та юррисем вилмеççĕ. Вĕсем халăх чĕринче, асĕнче. Сăвви-юррисем хăйсен асамлă ĕçне малаллах тăваççĕ: Тăван çĕршывăмăра, чĕлхемĕре, çывăх çыннăмăрсене юратса, хисеплесе пурăнма вĕрентеççĕ, пĕтĕм пурнăçне, ĕмĕтне халăх кунçулĕпе çыхăнтарнă поэт хăй те манăçмасть.

## Урташ-салтак сăнарĕ Урташ сăввисенче

«Валентин Урташ - чăваш поэзийĕнчи паллă ятсенчен пĕри. Çăмăл килмерĕ ун пурнăç шăпи: çитĕнсе яш çын пулнă çĕре вăрçă вучĕ сиксе тухрĕ, анчах шкул партти хушшинче ларакан ачасем Тăван çĕршыва хӳтĕлеме комсомолла хавхаланупа тухса кайрĕç. Тухса кайрĕç те - тĕнче усалĕн урăм-сурăм вăйĕпе çапăçассине хăйсем çине хăюллăн илчĕç. Хăшĕсем пурнăç курса ĕлкĕреймесĕрех пуçĕсене хучĕç, хăшĕсем сусăрланса юлчĕç. Çуралнă çĕрĕмĕре хӳтĕлесе хăварассишĕн мĕн тума май пуррине йăлтах турĕç вĕсем. Çав мухтавлă сăваплă ăру ачисенчен пĕри пулнă та ĕнтĕ пирĕн Валентин Урташ. Кайран та, фронтран йывăр суранланса таврăнсан, поэт литературăра та хăйне Брянск фронтĕнчи пекех теветкеллĕ те çирĕп тытрĕ. Халăх шухăшкăмăлĕпе пурăнчĕ вăл, халăх юррине юрларĕ, ялтан яла çӳрекен салтак хăй те ламран-лам вĕçекен юрă пек туйăнчĕ».

Чăваш халăх поэчĕ Юрий Сементер

Юрăпа вута-шыва эп кĕтĕм,
Юрăпа çĕнтертĕм вилĕме.
Юрăпа атте килне эп килтĕм,
Юрăпа çĕклерĕм килĕме.

Юрăпа эп пурнăçа юратрăм,
Юрăпа сыватрăм сурана.
Юрăпа эп ăраскал шăратрăм,
Юрăпа юратчăрччĕç мана.

Юрăпа йĕрес çĕртен эп култăм,
Юрăпа çуралтăм çĕнĕрен.
Юрăпа эп ăраскаллă пултăм,
Юрăпа ирттерĕп ĕмĕре.

4-41377
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Валентин Урташ пултарулăхĕнче Тăван çĕршывăн аслă вăрçи темипе çырнă сăввисем самаях пысăк вырăн йышăнаççĕ. Шăпах вăрçă çулĕсенче литература каçалăкне пуçăннă вăл. Çак темăллă сăвăсем пурте тенĕ пекех автобиографиллĕ, вĕсем пурте автор чунĕнчен, пурнăçĕнчен шăранса тухнă.

«...Ялти пуçламăш шкулта (Тутарстан, Пăва районĕ, Раккасси), кайран Элшелти вăтам шкулта вĕрентĕм. Ун чухнех литературăпа интересленеттĕм. Малалла вĕренес кăмăл пысăкчĕ, анчах та 1941 çулта вăрçă пуçланчĕ. Путланчĕ ĕмĕтĕм. Пиртен аслăраххисем вăрçă хирне кайрĕç. Эпĕ те 1941 çулхи раштавăн пĕрремĕш кунĕсенче хам ирĕкпе фронта кайрăм. 1943 çулччене хçапăçусенче пултăм. Салтакран пуçласа взвод командирĕн помощникне, старшинана çити ӳсрĕм. Брянск тăрăхĕнче пынă пĕр çапă-çура хамăн умра мина çурăлса кайнипе йывăр амантăм. Аманса сусăрланса пĕтнине пула вĕренесси те, путлĕ ĕçе вырнаçасси те пулмарĕ. Халĕ пенси укçипе пурăнатăп», - çапла çырнă Валентин Урташ 1970 çулта автобиографийĕнче.

Вун çиччĕ тултаричченех хăй çулне пысăклатса кăтартса, кĕлеткипе çӳллех те мар çамрăк, ача ĕнтĕ, аслисемпе пĕр рете тăрса тăшмана хирĕç паттăррăн кĕрешет. Вăрçă нушине чăтмалла мар ытлашшипех курнă вăл - çапăçу хирĕнче сулахай аллине, тепĕрин пӳрнисене, хăрах куçне çухатса, пĕтĕм ӳт-пĕвĕпе сусăрланса таврăнать. Апла пулин те хуçăлса ӳкмест. Сăвăç чунĕллĕ çуралнăскер, çĕкленӳллĕ, хавхалануллă сăвăсем çырать. Поэтăн фронтран тăванĕсем патне янă çыру-сăввисем поэзин чи паха тĕслĕхĕсем пулса чăваш литературин ылтăн фондне кĕрсе юлчĕç. Вĕсенчен чи паллăраххисем - «Анне патне» тата «Аппа патне» çыру-сăввисем.

«Анне, эп вун çиччĕ тултартăм,
Вун саккăра кайăп ыран.
Шинель тăхăнма та пултартăм, -
Кама халь шинельсĕр куран.

7713??
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Килте сан çăнăх та çук-тăр,
Аш çук-тăр шăрттан типĕтме.
Ăçтан килĕмре çимĕç пултăр,
Парсан фашиста пĕтерме.

Атте, эп вун çиччĕ тултартăм,
Вун саккăра кайăп ыран.
Канмасăр çĕр каç çутăлтартăм,
Урамçăм иртмест ураран.

Сыв пултăр декабĕрĕн каçĕ,
Хаяррăн урсам шартлама.
Ютсем те хытаççĕ, чакаççĕ,
Хĕл тухрĕ çулне картлама».

1941 çулта фронтран янă çак сăвă-çырури йĕркесем вун çиччĕ çулти салтак сăнарне куç умне кăлараççĕ. Мал ĕмĕтлĕскер, Тăван çĕр-шывне чун-чĕрĕрен юратаканскер, тăшмана хăвăртрах çапса аркатса киле таврăнасчĕ, тет.

Акă «Аппа патне» сăвă-çырури йĕркесем:

«Эс пĕлетĕн, ӳсрĕм шухă,
Пит те шухă ӳсрĕм ачаран,
Çав-çавах тытмарăм ирсĕр шухăш
Укçа-мĕн илмешкĕн ачаран.

Тантăшсем каçпа пĕр пиллĕк-улттăн
Вăрлама сиксессĕн пахчана,
Чун-чĕрем калатчĕ: эс ан хутшăн,
Ыйт - хуçи хăех паратъ сана.

Вăрçăра çӳретĕп эпĕ халĕ,
Вăрçăра çӳреççĕ тантăшсем.
Инçетре пулсан та ырă ялăм,
Кил çинчех, аппаçăм, шухăшсем».

Малалла вуланăçемĕн пирĕн ума салтак сăнарĕ тухса тăрать. Çав салтакăн асĕнче ачалăх кунĕсем, тăван кил, тустантăшсем каймаççĕ. Çав ăнлавсем этемшĕн чи çывăх ăнлавсем пулса тăраççĕ. ...Çын вилĕме хирĕç хăрушă тытăçăва тухнă пулин те, пурнăç çине оптимистла пăхать. Тăван кил çинчен аса илет те: «Çапăçмашкăн çăмăл, сивĕ окопра та ăшăрах», - тет. Çав кил ирĕклĕхĕшĕн урнă фашистпа çапăçма тивет унăн. Çав кил - пирĕн аслă Тăван çĕршыв. Автор салтаксем Тăван çĕршыва юратнине, уншăн пуç хума хатĕррине пĕчĕк, анчах та питĕ сăнарлă пайрăмсемпе ӳкерсе кăтартнă. Тăван çĕршывăн салтакĕсем тăшмана аркатасса, тăван кил-йыш ытамне таврăнасса çирĕп ĕненет. Çак ĕненӳ ăна та çирĕпрех пулма хистет.

«Сан валли те пĕр сĕнӳ пур манăн:
Тĕрлесе хурсамччĕ çĕн кĕпе.
Пĕлнĕ пул: шăпи тулать тăшманăн,
Çӳрес çук эп ĕмĕр шинельпе.

Эс мана та, йыснана та курăн.
Таврăнасчĕ, тетпĕр, ушкăнпа.
Кĕтсе юл, аппаçăм, кĕтсе пурăн,
Çырăва вĕçлетĕп салампа».

Çакăн пек оптимистла ĕнĕнӳпе «Вăрçăра та куратăн çав тĕлĕк», «Амансан» сăвăсем сăнарланнă. Поэт-салтак каланисем пурнăçланчĕç. Пирĕн халăх урнă фашист эшкерне çапса аркатрĕ. Çак çĕнтĕрӳре В. Урташăн пайти те пур - çапăçури паттăрлăхшăн ăна Аслă Отечественнăй вăрçă I степеньлĕ орденĕпе тата медальсемпе наградăланă.

Урташăн вăрçă çинчен çырнă сăввисене вуланă чух ирĕксĕрех куç умне куççуль капланать, чун-чĕре таппийĕ хăвăртланать, çан-çурăм сăрăлтатса илет. Хумханмасăр вулама та çук вĕсене. Çавăн пек хăватпа сăнарланнă çав сăвăсем.

«Çыру çырмашкăн аллăм çуккă,
Шур хут парсан та шур аппа.
Ĕнер кăна выртаттăм суккăр,
Паян куратăп хам куçпа.

Ĕнер кăна сĕм-тĕттĕм каçчĕ.
Чалма хуплатчĕ куçăма.
Хĕвел курма çуралнă каччă,
Çынпа тухаттăм уçăлма.

Курмастчĕ ман çут çăлтăр куçăм
Çурхи хĕвелĕн çутине.
Курас килетчĕ йăмăх шуçăм
Хĕре киле ăсатнине,

- тесе çырать поэт «Çыру çырмашкăн аллăм çуккă» сăвăра. Лирикăллă герой синкерĕ автор синкерĕпе пĕр килсе тухнă. Çакă пире сăвăç чунне, кăмăлне, шухăшне ăнланса илме пулăшать. Сăвă содержанийĕ хурлăхлă ĕç пирки калать пулин те, кунта мĕскĕнленсе йынăшнисем илтĕнмеççĕ. Лирикăлла герой тăшмана çапса аркатасса çирĕп ĕненет. Пурнăç хĕвелĕ ăна вăй парать, сурансене çĕнтерсе ура çине тăма пулăшать.

«Ан тив, ан пултăр мăшăр алă,
Çавах ĕç тупăп эп, аппа.
Тен, ĕçĕмпе те пулăп паллă,
Çаплах эп çÿрĕп ыр ятпа».

Герой синкерĕ, асапĕ уйрăмах «Анне патне», «Аннемĕр сăмахĕ», «Анне, эп вун çиччĕ тултартăм», «Сĕрме купăс» сăвăсенче палăрать. Çапах та вĕсенче сывлăхсăр юлнишĕн пăшăрханни çук. Пачах урăхла, вăрçă суранĕсене çĕнтерсе чечекленекен пурнăç енне туртăнни, мал ĕмĕтлĕ пулни, ирĕклĕх, тăнăçлăх ăнлавсене хÿтĕлеме яр уççăн чĕнни палăрать. Акă, «Ан манăр!» сăвви ăрусене пилленĕ халал пек янăрать:

Ман сурансем-и? Пулччăр ман çире,
Эп курнине ачам-пăчам ан куртăр,
Вилнисене курса, сыхлар чĕррисене,
Çапăçса мар, ĕçрен килсессĕн канăр.

Куç шăрçи евĕр упрăр тĕнчене,
Çут тĕнчене вутра çунма ан парăр,
Çын суранне, чун суранне ан манăр.

Урташ сăввисенче лирикăллă герой Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн кĕрешме тивнишĕн, çĕнтерӳре хăйĕн пайти пулнишĕн савăнать:

Ӳкĕнес çук суранлă юлнăран,
Юна тăкса, ирĕк кунсем эп акнă.
Çап-çамрăкла вутра эп пулнăран,
Тăван çĕршывăм, пултăн пуль хăватлă,
Эс маншăн пулнă хаклă ачаран,
Хам аллăмран та, куçăмран та хаклă.

Урташ геройĕ «хăйĕнне» пĕр пĕтĕм пĕрлĕхрен уйăрмасть. Ун синкерĕ - çĕршыв синкерĕ, ун савнăçĕ - çĕршыв савнăçĕ:

Ман суран - çĕршыв суранĕ,
Ман суран вăл сан суран.
Сурана чĕремçĕм манĕ
Пĕр-пĕрне юратнăран.

1946 çулта «Чăваш коммуни» хаçатра «Тухăçран хăпарсан шурăмпуç» сăвă пичетленет. «Эп ун чухне пропаганда пайĕнче ĕçлеттĕм. Пӳлĕме пысăк мар, çырă çӳçлĕ çамрăк кĕрсе тăчĕ. Вăл сăвă илсе килнине пĕлтерчĕ. Çавăнтах вуласа пачĕ. Килĕшрĕ вăл пире. Çитес номертех пичетлеме пултăмăр. Çывăх вăхăтра ытти сăввисене илсе килме сĕнтĕмĕр», - каласа парать Иван Саламбек писатель.

Пĕлесчĕ, В. Урташ ун чухне еплерех савăннине! Паллах, çав сăвă композиторсене килĕшессе шутламан та-ха вăл. Хаçатра пичетленнишĕн те пĕтĕм чунĕпе хĕпĕртенĕ. Часах Чăваш радиоран «Тухăçран хăпарсан шурăмпуç» юрра янратаççĕ. Халăх кăмăлне каять вăл. Ăна пур çĕрте те юрлама пуçлаççĕ.

«Вулакансем ас тăваççĕ çав çулсене. «Тухăçран хăпарсан шурăмпуç» юрă ун чухнех халăх хушшинче çиçĕмле хăвăртлăхпа сарăлчĕ, ăçта пынă, унта халăх юрлатчĕ.

Вăрçă хыççăнхи халăхăн шухăш-кăмăлне çав вăхăтра хăй пурăннă çын çеç ăнланма пултарать. Мĕн чухлĕ савăнăç вĕремен пулĕ ун чухне çын чĕринче. Вăрçă çулĕсене чăтса ирттернĕ кашни çын чĕри Аслă Çĕнтерӳ хыççăн хаваслăхпа, савăнăç туйăмĕсемпе тулнă. Кашни çыннăн çакăн çинчен каласас килнĕ кăна мар, юрлас килнĕ. Çӳлĕрех асăннă юрăсем вара, халăх кĕтнине пĕтĕмпех тивĕçтернине пула, хăвăрт та анлăн сарăлнă», - тет Валентин Урташăн пĕрремĕш сăввисем пирки поэта хăй те лайăх пĕлекен Р. Чепунов.

Тăвата çула пынă хăрушă вăрçă çухатусăр иртмерĕ. Пирĕн халăх хăйĕн нумай ывăл-хĕрне ĕмĕрлĕхех çухатрĕ. Тăшмана парăнмарĕ вăл, ун умĕнче пуç усмарĕ, чĕркуçленмерĕ. Йывăр çухатусем паянхи çутă та илемлĕ пурнăçшăн пулнине лайăх ăнланатпăр. Паттăрсем асран тухас çук. Ак, «Сĕрме купăс» сăвăра лирикăлла герой хăйĕн савнине кĕтсе пурăнать:

Миçе хут улмуççи çеçке çурчĕ,
Миçе хут хĕрелмерĕ анис.
Çав анис сăнĕ пек савни пурччĕ,
Килеймерĕ, хуть те мĕнле тӳс.

Аякран курăнать шурă шупăр,
Шурă шупăр уртать улмуççи.
Юрласам, калаççам, сĕрме купăс,
Эсĕ манăн савни, чун уççи.

Валентин Урташăн вăрçă темипе çырнă сăввисем вулакан чĕрине асамлă вăйпа вырнаçаççĕ. Произведенисен чĕлхи, тытăмĕ, тĕрлĕрен илемлĕх мелĕсем халăх калаçăвне çывăх пулнăран килнĕ çак асамлă вăй. Поэт сăввисем хăй тăшманпа арăсланла çапăçнă вăхăтрах чун-чĕре тĕпĕнче хĕмленнĕ. Вĕсем çуркуннехи чечексем пек çирĕпленсе çитсенех халăх савнă юрăсем пулса тăчĕç.

Поэт хăйĕн сăввисем пекех усă кăмăллă, çирĕп, харсăр пулнă. Н.С.Дедушкин литературовед çапла аса илет:

«Вăрçă асапне, пурнăçри йывăрлăхсене пайтах чăтсатӳссе ирттернĕ поэт чун-чĕрипе ялан çирĕп, хăюллă та харсăрччĕ. Унăн произведенийĕсенче эпир пурнăç çине çутă куçпа, çутă шанчăкпа пăхнине çеç куратпăр».

Вăрçăран йывăр сурансемпе таврăннă пулин те, пуç усман. Мирлĕ ĕçре пултарнă таран тăрăшнă. Асаплă, йывăр пулсан та пурнăç оптимизмне çухатман. Тĕрĕсмарлăха, çын çынна хисеплеменнине чăтма пултарайман. Хĕрӳ чĕреллĕ, савăк чунлă, усă кăмăллă поэт пулнă вăл.

2003 çулта пичетленсе тухнă «Чăваш литератури. 8-мĕш класс» вĕренӳ кĕнекине В. Урташăн «Пурăнас килет» ятлă поэмине кĕртме май килчĕ. Халиччен поэтăн ун пек пысăк хайлавĕсене шкул программинче вырăн паманччĕ. Произведение хумханмасăр вулама çук. Патриотла туйăмпа, чунри чи вăйлă тарăхупа, ыратупа витерĕннĕ вăл. Хайлаври герой çап-çамрăклах хăй ирĕкĕпе вăрçа тухса каять, тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçать. Аманать, чăлах юлать, çапах пуç усмасть. Çĕршыв умĕнче этем тивĕçне пурнăçлассишĕн пултарнă таран хăйĕн вăй-хăватне парать. Кам хавхалантарнă ăна? Тăван çĕршыв, атте-анне, ял-йыш, тус-тăван.

Поэма виçĕ çаврăмран тăрать. Пĕрремĕш çавринче çамрăка вăрçа ăсатнине куратпăр. Иккĕмĕшĕнче вăл вăрçă хирĕнче çӳрет. Виççĕмĕшĕнче аманнă хыççăн киле таврăнать. Произведенире чуна çатăрласа илекен вырăнсем сахал мар. Автор калаçу формипе те питĕ ăнăçлă усă курать. Унта эпир Урташăн чун ыратăвне çеç мар, унăн пултарулăхне те лайăх туйса илетпĕр.

Чăваш халăх поэчĕ Г. Айхи каласа панинчен: «Вальăпа (Урташпа) пĕрле Шупашкар, Патăръел районĕсем тăрăх çӳрерĕмĕр. Урташ тĕлĕнмелле ăста, илемлĕ çынччĕ. Сăввисене питĕ хитре калатчĕ. Юрласарах тенĕ пулăттăм. Сăввисене те юрласа çыратчĕ пулас. Сасси те питĕ хитреччĕ, юрра ăстаччĕ. «Пĕлетĕп, сахал юлчĕ пурăнасси, питĕ пурăнас килет...», - терĕ те вăл «Укăлча умĕнче» юрра тунсăхлăн, çав вăхăтрах хавхаланулла юрлама пуçларĕ».

Нумаях пурнайман Валентин Урташ. Вăрçă суранĕсем мĕн виличченех канăç паман ăна, тен, хăйне упрайманни те пулнă-тăр, халăх юратăвне тивĕçнĕскер, 49 çул та тултараймасăр пурнăçран уйрăлнă.

«Ăраскал вăл - шăпа. Çын хăйĕн тивĕçне халăх умĕнче мĕнле пурнăçланине кура ăраскаллă теме пулать», - çапла çырнă В. Урташ «Ăраскал» ятлă сăвă умĕнче. Хăйĕн пирки çырнă тейĕн. Шăпине халăх кун-çулĕпе тачă çыхăнтарса нумай сăвă-юрă шăрçаларĕ вăл. Çавăнпа телейлĕ-ăраскаллă пулчĕ.

## Юрату сăввисем

В. Урташ пултарулăхĕнче юрату ыйтăвне хускатнă сăвăсем чылаях. «Юрра юрату çуратать» тенĕ евĕрех, унăн кашни кĕнекинче çуррине яхăн сăвви юрату, туслăх, çамрăклăх кĕввисемпе тĕрленнĕ.

Литературăн «вилĕмсĕр» теми кашни писателех хумхантарать. Кашниех çĕннине калама тăрăшать. Чăваш литературинче юрату лирикине аталантарма паха çăлкуçсем чылаях. Тĕслĕх илме К. Ивановăн «Нарспи» сăнарĕ кăна мĕне тăрать! Çеçпĕлĕн юрату темиллĕ сăввисемпе çырăвĕсем кивĕлми тĕслĕхсем пулса тăчĕç. П. Хусанкайăн Наталийĕ, А. Артемьевăн Салампийĕ çамрăксене хумхантараççĕ.

Паллах, кашни поэт хăйĕн идеалне шырать. Анчах та вулакан кăмăлне тивĕçтерме кашниех пултараймасть. Урташ сăввисем пирки аплах калаймăн. Вĕсем, чи малтанах: халăх чунне çывăх тăраççĕ; иккĕмĕшĕнчен: вĕсем питĕ уçăмлă, çав вăхăтрах тарăн шухăшлă, туйăмлă сăвăсем; виççĕмĕшĕнчен: вĕсенче пурнăç философийĕ пур. Вĕсем пытарăннă туйăма вăратса çĕклентерсе яма пултараççĕ.

В. Урташ лирикинче чăвашла чăн шухăшсем те, паллă поэтсен ырă витĕмĕ те палăрать. Чăн та, поэт çырса хăварнисенче Çеçпĕл, Кăлкан, Илпек ячĕсемсĕр пуçне урăххисене курмастпăр. «Халăх пултарулăхĕпе витерĕннĕ поэт», - тенĕ вăл хăй пирки.

Сăвăçшăн С. Есенин пултарулăхĕ çывăх пулнине палăртмасăр иртме çук. Ку сăвăсен темисем пĕрпеклĕхĕнче çеç мар, икĕ поэта пĕр сăнарсем çывăх пулнинче те мар, ытларах стиль тата шухăша мĕнле мелсемпе палăртнинчен килет пулĕ.

Эс мана асран ямастăн пулĕ,
Çуратса ӳстернĕ ывăлна.

Асăнсан тухать пуль куççулĕ,
Каçсерен татан пуль ыйхăна.

Шухăшпа эс, тен, манпа пулатăн,
Тĕлĕкре çӳрен пуль вăрçăра!
Хам кирек ăçта кăна кайсан та,
Эс, аннеçĕм, ĕмĕр асăмра.

Умăмрах-ха ула хур яшки те,
Ăсатма пуçтарнă кĕреке.
Аллăмрах пек ăсату курки те,
Сан çинчех пек çĕнĕ çипиркке.

(В. Урташ «Анне патне»)

Çак сăвва вуласанах С. Есенинăн «Анне патне янă çырăвĕ» аса килет:

Эс сывах-им, манăн ватăскерĕм?
Эп сывах. Салам сана, салам!
Калама çук каç çути сенкеррĕн
Сан пӳртӳ çинче çунма сунам.

Сан ăшу вăркать-мĕн, - пĕлтереççĕ, -
Хытă тунсăхлать-мĕн мана.
Çул çине час-часах тухатăн, теççĕ,
Тăхăнса кивелнĕ сăхманна.

Икĕ поэтăн шухăшĕсем, кĕввисем пĕр евĕр туйăнаççĕ. Апла пулин те, Урташăн сăвви - Урташăнах. Вăл чăн чăвашла янăрать. Сăвва пысăк чунлă, талантлă аслă поэт çырнă. Çавăнпа чăваш сăвăçине Раççейĕн Есенинĕпе танлаштарнă пулăттăм. Акă мĕн çырать П. Ялкир поэт: «Урташ ятне асăнсан, пире хăй вăхăтĕнче М. Горький Сергей Есенин пирки каланă сăмахсем аса килеççĕ. Унта вăл вырăссен чаплă сăвăçне сăвă хайлакан органпа (инструментпа) танлаштарнă. В. Урташ та çавăн пекех çутçанталăк ятарласа çуратнă поэтсен шутне кĕрет».

Поэтăн юрату лирики икĕ çулпа аталанать: пĕрремĕшĕ - Тăван çĕршыва, аннене, çывăх çынсене хисепленине кăтартасси; иккĕмĕшĕ – тус савние чун-чĕререн юратнине сăнарласси.

В. Урташ геройĕ тăван амăшне, çывăх çынсене хисеплени, юратни «Анне патне», «Атте панă вăя», «Каçар, аннем», «Атте-анне юратнипе» сăвăсенче витĕмлĕн сăнарланнă. «Тавах, анне» сăвă пирки малтанах каланăччĕ ĕнтĕ: унти кашни сăмах, кашни йĕрке хăйне евĕрлĕ, хитре сăнарлă. Кашниех пĕчĕк аса илӳ пек вуланать. Тăван çĕршыва епле юратнине ак мĕнле кăтартать поэт:

Тăван çĕршыв, сана юратрăм
Мĕн пĕчĕкрен, мĕн ачаран.
Пĕр саншăн çеç юрра шăратрăм,
Чун савнăран, чун туртнăран.

(Сана юратрăм)

1946 çулта литература çулĕ çине тин çеç тăнă поэт çапла çырнă:

Шăпчăкран эп илтĕм сассăма,
Халăхран вĕрентĕм пурăнма,
Халăх пек илемлĕ пурăнма
Ĕçĕме паратăп чунăма.

(Пурнăçран ытла саватăп)

Тăван çĕршывăмăра чĕререн юратса пурăннине «Тăванран та тăван», «Юрра юрату çуратать» сăвăсем лайăх ĕнентереççĕ.

Чăнах та, поэт çак туйăмпа хавхаланса сахал мар хитре сăвă хайланă.

В. Урташ тăван хуламăра – Шупашкара – чунтан савнă. Атăл илемĕпе киленнĕ вăл, Шупашкар çăкисене юратнă, ытларах унăн ĕçченĕсемпе савăннă. Хули те вăл пурăннă çулсенче ӳссе, чечекленсе пынă. Çак савăнăçпа çунатланса

«Шупашкарăн лăпкă каçĕсем», «Саншăнах», «Шупашкар хĕрĕсем», «Хăнасем пухать хуламăр», «Юрласа сатин тĕртеççĕ», «Шупашкара килтĕм» сăвăсем шăрçаланă.

Юрă пек, юмах пек Шупашкарăм
Çăкисем çеçке çурнă чухне.
Эп çеçке пулмашкăн шухăшларăм,
Юрату лартмасть-ши çеçкене!

- тет поэт «Саншăнах» сăвăра. Чунри ăшă туйăмпа вăл «Шупашкарăн лăпкă каçĕсем» сăвва çапла тĕрлет:

Ахальтен сире хĕрсем савман пуль,
Ахальтен савман пуль каччăсем.
Çамрăк чух кам ыйхине татман пуль
Шупашкарăн лăпкă каçĕсем.

Юрату çинчен çырнă сăвă пурнăç илемĕ пĕр-пĕрне хисепленинче, ырă ĕçсен пуçламăшĕнче тесе вĕренттĕр, тет Урташ.

«Хальхи çамрăксен юратăвĕнче эпир хамăр вăхăтри çынсен чи хаклă пахалăхĕсене – пĕр-пĕрин шанăçне кирек мĕнле лару-тăрура та тӳрре кăларма пултарнине, этем чысне пĕлнине, таса та çутă ĕмĕтсем пурнăçа кĕрессине яланах ĕненсе пурăннине куратпăр», - тет М. Юрьев Урташ сăввисене хакласа.

Урташ сăввисенче юрату пурнăç шавĕпе тан пырать. Поэт геройĕн туйăмĕ таçта катара тунсăхласа çӳрекен çын туйăмĕ мар - ĕçре, канура, вĕренӳре çуралакан юрату вăл. Автор чун тасалăхне, чăн туслăха, кăмăл çирĕплĕхне мухтать. Çакна эпир «Укăлча умĕнче», «Юрату юрлаттарать», «Юрату, юрату хăварсам», «Саншăнах», «Сĕрме купăс», «Ма чипер-ши ферма хĕрĕ», «Тухăçран хăпарсан шурăмпуç» тата ытти сăвăсенче куратпăр. Вĕсенчи çепĕçлĕх, ăшă туйăм, пурнăç хаваслăхĕ пире хавхалантарать, çунатлантарса ярать. Сăвăç çамрăксен юратăвне таса та сăпайлă ӳкерет. Вĕсем пĕрре курсанах

мăйран уртăнмаççĕ, улах вырăнсенче вĕçкĕнленмеççĕ. Вĕсем - пĕр-пĕрне «Сĕрме купăсри» пек хуть ăçта пулсан та ĕненсе кĕтсе пурăнакансем, е «Укăлча умĕнче» юрăри пек тусне аса илсе тăракансем.

Пĕр-пĕрне юратакан çамрăксем именчĕклĕ те вăтанчăклă, чăн чăвашла сăпайлă та ырă кăмăллă пулнине куратпăр:

Çулла калас çу пек сăмахăма
Кĕрхи каççем валли сыхларăм.
Кĕрхи каççем çитсен, сана курсассăн,
Хĕр куçĕнчен пăхма хăймарăм.
Калаймарăм калас сăмахăма
Хамăнах та савнă тусăма.

(Калаймарăм)

Паллах, юратура та тунсăхсăр пулмасть. Поэт хăйĕн сăввисене хурлăхлă кĕвĕсем кĕртмест, ытарлăн шӳтлесе çапла шăрантарать:

Эс те шăпчăк,
Эп те шăпчăк,
Юрату юрлаттарать,
Юрату юрлаттарать те
Чĕрене ыраттарать.

(Юрату юрлаттарать)

В. Урташăн геройĕ яланах тантăшĕсем хушшинче. Юрату ăна маттур, харсăр пулма вĕрентет. Çакна эпир «Шупашкар хĕрĕсем» сăвăра лайăх куратпăр:

Мĕншĕн пит хитре-ши тетпĕр
Чăваш халăх тĕррисем;
Тĕррине тĕрлетпĕр тетпĕр
Шупашкарăн хĕрĕсем.

Ай, тантăш-тусăмсем,
Шупашкарăн хĕрĕсем,
Мухтанмашкăн,
Савтармашкăн
Пирĕн çук-и тĕрĕсем!
Мĕншĕн пит ăста-ши тетпĕр
Пирĕн тантăш-туссене?
Каччăсем савмаççĕ тетпĕр
Ăста мар пикесене.
Ай, тантăш-тусăмсем,
Шупашкарăн хĕрĕсем.
Эпир мар-и,
Эсир мар-и,
Шупашкар илемĕсем!

В. Урташ мĕн виличченех сăввисенче таса юратăва, çирĕп туслăха мухтанă. Хăй калашле:

Поэт вăл хăй пурнăç, хăй юрă,
Юрра юрату çуратать.
Апла-тăк, чĕремçĕм ман, курăр,
Сÿнми юрату çеç усрать.

Çынсене савăнăç парнелеме юратнă сăвăçăн произведенийĕсем савăнăçлă, хÿхĕм, ăшă туйăмлă. Вĕсем халăх шухăш-кăмăлĕпе пĕр пулса çунатланнă. Çавăнпах пуль Урташ сăввисенчен кĕвеленĕ юрату юррисем халăхра анлă саралнă.

«Çавăнпа эп ăраскаллă пултăм», - тенĕ Урташ.

## Пурӑнас килет

В. Урташӑн «Пурӑнас килет» поэмине вулакансем лайӑх пӗлеҫҫӗ. 2002 ҫулта чӑваш литератури вӗрентӳ программине кӗртме май килчӗ ӑна. Саккӑрмӗшсем поэмӑна юратса вулаҫҫӗ, литература каҫӗсенче, концертсенче сценари йӗркелесе каласа кӑтартаҫҫӗ.

Поэтӑн «Йӑхран йӑха», «Турӑш», «Пӗчӗк роза», «Ҫунатлӑ Шуршӑл» поэмисем пичетленнӗ. Вӗсемсӗр пуҫне «XX ӗмӗр ҫынни» сӑвӑлла пьеса, «Ҫуллахи ҫил», «Пирӗн Володя» поэмӑсем ҫырни паллӑ. Архивра пӗр интереслӗ хут упранать:

Чӑваш кӗнеке издательствин
тӗп редакторне А. Горшкова

Тӑватӑ ҫул каялла «Пирӗн Володя» ятлӑ поэмӑна ҫырма пуҫӑнтӑм. Ҫав тӗллевпе манӑн Ульяновскри Ленин музей-ҫуртӗнче пулмалла. Творчествӑлла командировка йӗркелӗр-ха.

Поэмӑна (2 автор листи) 1967 ҫулхи плана кӗртме ыйтатӑп.

Валентин Урташ

Ӑҫта-ши ҫак поэма? Мӗншӗн пичетленмен-ха вӑл? Маларах асӑннӑ хайлавсен ал ҫырӑвӗсен тӗлли-палли халлӗхе ҫук-ха. Вӗсене тупсассӑн поэтӑн пултарулӑхне тата та тарӑнрах пӗлме пулӗччӗ.

«...Сӑввисене савса памарӗ.
Ҫиллевлӗн печӗ Тилҫене.
Ҫурхи шывпа юхса каяйрӗ
Урташ тетрачӗ инҫене...», -

тесе ҫырать Анатолий Малышев сӑвӑҫ «Илеймен автограф ҫинчен хывнӑ балладӑра».

Мана В.Урташ йӗрӗпе ҫӳресе поэтӑн мӑшӑрӗпе Таиҫ аппапа тӗл пулма тивнӗччӗ. Шупашкарта К. Маркс урамӗнчи 62 номерлӗ ҫуртра пӗр пӳлӗмлӗ хваттерте пӗчченех пурӑнатчӗ вӑл. Хваттерне В. Урташа 1963 ҫулта панӑ пулнӑ. Халӗ ҫурт стени ҫинче кунта 1963 – 1973 ҫулсенче чӑвашсен паллӑ юрӑ-сӑвӑҫи Валентин Андреевич Урташ пурӑннине пӗлтерекен Асӑну хӑми ҫакӑнса тӑрать. Поэт мӑшӑрӗ Урташ тетрачӗсене пӗр палламан ҫын, вӑл хӑйне Раккасси ҫынни тесе паллаштарнӑ-мӗн, илсе тухса кайнине, каялла тавӑрса паманнине пӗлтерчӗ. Хӗрарӑм мӑшӑрӗн ҫырнӑ япалисене упраса хӑварас тесе тӑрӑшманни куҫ кӗрет. Чӑваш Гуманитари институтӗн ӗҫченӗсем ҫине тӑнипе ҫеҫ В.Урташӑн темиҫе хутне, хӑш-пӗр ал ҫырӑвӗсене архива хума май килнӗ. Филологи ӑслӑлӑхӗн кандидачӗ Е.С.Сидорова поэт хваттерӗнче темиҫе хутчен те пулни, Урташ хучӗсем тирпейсӗр унта-кунта выртни пирки каласа панӑччӗ, мӑшӑрӗ хаклама пӗлмесӗр ал ҫырусене кӑларса пӑрахма та пултарнине, е палланӑ-палламан ҫынсене тыттарса янине куларӗ.

В. Урташӑн «Пурӑнас килет» поэми Тӑван ҫӗршывӑн Аслӑ вӑрҫин шавне тепӗр хут илсе килет. Произведение хумханмасӑр вулама ҫук. Патриотла туйӑмпа та, чунри чи вӑйлӑ тарӑхупа та, витерӗннӗ вӑл. Лирикӑллӑ герой ҫапҫамрӑклах хӑй ирӗкӗпе вӑрҫа каять, тӑшмана хирӗҫ паттӑррӑн ҫапӑҫать. Аманать, чӑлах юлать, ҫапах та пуҫ уҫмасть. Ҫӗршыв умӗнче этем тивӗҫне пурнӑҫлассишӗн пултарнӑ таран хӑйӗн вӑй–хӑватне парать. Кам хавхалантарнӑ ӑна – Тӑван ҫӗршыв, атте–анне, ял-йыш, тус-тӑван.

Позмӑн пӗрремӗш пайне автор «Малтанхи ҫавра» тесе ят панӑ. Ял-йыш ҫамрӑка вӑрҫа ӑсатнипе пуҫланать вӑл. Ашшӗ-амӑшӗ панӑ пил витӗмлӗ, вӑл ҫӗршыв пилӗ пек янӑрать:

Паттӑр пул, ҫирӗп пул,
Чӑх чӗриллӗ ан пул! -

тет ашшӗ ывӑлне. Тӑшмана аркатса ҫӗнтерӳпе таврӑнма пиллет вӑл салтака.

Çĕр çулхи Упамсар калакан сăмахсем халăхăн кăмăлтуйăмне, çирĕплĕхне, паттăрлăхне витĕмлĕн кăтартаççĕ:

Ят ан ярччĕ, ачам,
Çичĕ ютăн вутне,
Хуса ярччĕ, ачам, урнă йытă йăхне.
Паттăр манас çук хăй тăван халăхне.
Аркатсамччĕ, ачам, çав тăшман эшкерне,
Тек ан çитĕр çĕлен çын пуçне, çын куçне.

Кашни йĕркенех – не аффикссемлĕ сăмахсемпе вĕçленипе Упамсар пилĕ тата вăйлăрах пусăм илет. Калас шухăш витĕмлĕрех пулса тухать. Çаврара ватă Упамсар каччăпа хĕре каланă сăмахсем, сывпуллашу саманчĕ Тăван çĕршыв салтакне хурçă пек çирĕп пулма хавхалантараççĕ. Автор калаçу чĕлхипе питĕ ăста усă курать. Сăвă интонацийĕ чи малтанах тӳлек, унтан вăйланса пырать те Упамсар сăмахĕнче чи çӳллĕ пусăма çитет. Çавра вĕçĕнче малалла «калав» пуçланасса систерсе интонаци каллех тӳлекленет:

Мĕн курни,
Мĕн тӳсни,
Паян кун асăмра;
Чĕремре - чунăмра,
Сăввăмра - юррăмра.

«Иккĕмĕш çаврара» героя вăрçăра куратпăр. Пĕр салашăн пыракан çапăçу çинчен ăста каласа панă:

Юр çăвать, пăр çăвать
Пирĕн çар, Хĕрлĕ çар
Тăшмана хăвалать.
Ятлаçать миномет,
Калаçать пулемет,
Автомат - хăямат
Хăй ĕçне хăй тăвать.

Сăмах вăйĕ... Çак йĕркесене вулатăн та тӳрех çапăçу шавĕ илтĕнсе каять. Сасăсен вылявĕ пире чăнах та автомат-хăямат хăй ĕçне хăй тунине ĕнентерет.

Поэмăра пĕр çапăçу эпизочĕ çеç. Героя ытларах çавăнта пĕлсе çитетпĕр. Вăл чăнах та паттăр, хăюллă пулнине, ашшĕ панă пиле, Упамсар сăмахне тӳрре кăларнине куратпăр. Çав çапăçура пирĕн герой аманнă хĕр-радисткăна çăлать, вокзала тăшманран хӳтĕлесе хăварать, анчах хăй те йывăр аманать.

Пурнăçа юратса,
Çĕршыва юратса,
Ют çĕрте юн тăкса,
Эп тухрăм вутран,
Аннене макăртма,
Тăванпа тĕл пулма,
Савниреп уйрăлма
Эп килтĕм ютран.

Герой вăрçă вутĕнчен йывăр асаппа, синкерпе тухнине туятпăр. Вăл амăшне макăртассине те пĕлет, савниреп уйрăлма та малтанах палăртса хурать. Малалла вуланăçемĕн лирикăллă геройăн чунĕпе, кăмăлĕпе, шухăш-туйăмĕпе паллашса çитетпĕр.

Куç умĕнче аманса-суранланса килне таврăннă совет салтакĕ. Çук, пуç усмасть вăл. Ялта çуралса ӳснĕскер, ялти ĕç-пулăма лайăх пĕлекенскер, текех ял пурнăçне çак сывлăхпа юрăхсăр иккенне ăнланса илет. Мĕнле пурăнмалла? Ача чухне художник пулма ĕмĕтленнĕ, халĕ «художник пулма куç вăйĕ юлман», тракторист, агроном пулма та пӳрмен иккен ăна.

Инçетре, инçетре çĕр çунать, çĕр йĕрет,
Тăшмана-çĕлене Совет çарĕ йĕрлет.
Ман ларас-и вара, килĕмре пуç усса,
Пулаймасть-ши чăнах, çынсем пек ĕç тупса.

Лирикăллă герой çĕнтерĕве çывхартас тесе паттăрла çапăçнă, сывлăхне çухатса таврăннă пулин те лăпланса ларасшăн мар. Акă мĕнле вăл, чăн-чăн салтак, патриот. Унăн ырă сăнарне, чунĕ ыррине çакăнтан куратпăр: каччă хăйĕн савнипе тĕл пулмасть. Унăн юратăвĕ хăйĕн пурнăçне лăпкă та пулăхлă тăвас шухăшран нумай пархатарлă. Хăйне мĕскĕннĕн туяс килмест унăн. Ыратăвне, синкерлĕхне тăван пĕлĕшĕ умĕнче кăтартас килмест. Çавăнпа вăл «хĕрпе те калаçмасть, вăййа та тухмасть», ялтан пăрахса каять.

«Автор поэма финалне - развязкăна туса çитереймен. Савнă хĕрĕ йывăр суранланса таврăннă каччин шăпипе интересленменни, автор пĕр-пĕрне савакан çак ик çамрăка тĕл пултарса калаçтарманни геройсен характерне хирĕç-лет», - тенĕччĕ А. Васильев-Васан тĕпчевçĕ.

Çамрăксем пĕрлешсе телейлĕ пурнăçпа пурăннине кăтартсан поэма тата та ăнăçлăрах пулатчĕ, имĕш. Авторăн вара çапла тума хал çитмен. Урăхла çырма пултарайман та.

Аса илер-ха, вăрçăран лирикăллă герой мĕнле таврăнать: «Аннене макăртма, савнирен уйрăлма» тенĕччĕ вăл. Çук, савнипе тĕл пулса калаçма мар, ун куçĕ умне курăнас мар тесе таврăнать вăл тăван ялне. Мĕншĕн çапла тăвать-ха:

Çавасем туптаса, çынсене вăратса,
Ял-йыш кайĕ çуллен улăха ут çулма,

Кил-йыша ăсатса, кас-йышна ăсатса»... ярсан кил хуралĕ пулма шухăш çук унăн.

Лирикăллă герой схемăллă, пĕтĕмпех ырă енсенчен тăракан сăнар мар, унăн хăйне уйрăм чунĕ, кăмăлĕ, шухăшĕ, туйăмĕ пур. Ман шутпа, автор хăйĕн геройне психологи тĕлĕшĕнчен питĕ тĕрĕс те витĕмлĕ сăнарланă.

Произведени вĕçĕнче чуна çатăрласа илекен вырăн пур. Вăл поэмăри тĕп сăнар нумай çулсем иртсен тăван ялне таврăнни çинчен каласа парать:

Калаçать ман аппа макăрса, хурланса
Юмаххи ун юхать, шăранса, юрланса.

Эсӗ килтӗн, Валя. Ман хăçан килӗ-ши?
Е чăнах, чăн-чăнах, çулăмра çунчӗ-ши?

Кăмрăкланчӗ пулсан вăрçăра, çулăмра,
Кӗл пулса-çӗкленсе ăçталла вӗçрӗ-ши?
Эсӗ килтӗн, Валя, ман хăçан килӗ-ши?
Тӗл пулса, чуп туса, ытамне илӗ-ши?

Вăрçă пӗтни миçе çул иртнӗ ӗнтӗ. Салтак арăмӗсем çаплах мăшăрӗсене кӗтеççӗ. Пӗчӗк деталь çеç, анчах мӗнле вăйлă сăнарлăх. Вăл иртнӗ вăрçăн трагедине вăйлă çутатать. Куç умне упăшкисене вӗçӗмсӗр кӗтекен хӗрарăмсен сăнарӗсем тухса тăраççӗ.

«Пурăнас килет» поэма автобиографилле драматизмпа та, чуна тыткăнлакан лирикăллă çаврăмсемпе те, эпикăллă туртăмпа та палăрса тăрать. Произведени чӗлхи хитре, интонацийӗ вăйлă.

«Чăваш литературинче патриотизм темипе çырнă чи лайăх поэмăсенчен пӗри», - тесе хаклать ăна Н.С. Дедушкин литературовед.

«Çунатлă Шуршăл» поэмăна сăвăç А.Г. Николаев космоса вӗçсе кайсан, Шуршăл ялӗнче çырнă.

Шуршăлта çуралтăн, юррăм,
Николаев ялӗнче,

- тет поэт. Произведение, чăнах та, çунатланнă туйăмпа çырнине тӳрех чухласа илетӗн. Ӗлӗк нимпе те палăрман пӗчӗк Шуршăлтан кам-кăна тухман: уй-хир паттăрӗсем, министр, агроном, çар çыннисем. Акă, тата тӳпене 3-мӗш космонавт Андриян Николаев хăпарнă.

Автор хăй умне поэма çырма тӗллев лартман, çавăнпа сăнарсене ӳкересси кăшт шупкарах та пек туйăнать, поэт пире ытларах Шуршăл, унăн çыннисем çинчен каласа парать. «Çунатлă Шуршăл» А.Г. Николаев çинчен çырнă произведенисен шутне пуянлатать, пӗтӗм çӗршывшăн çывăх ялпа паллаштарса пире савăнтарать.

Малarax асӑннӑ «Йӑхран йӑха», «Пӗчӗк Роза» произведенисене сӑвӑлла очерксем тесе хаклама пулать. «Йӑхран йӑха» поэма вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи йывӑрлӑхсене ял ҫыннисем чӑтӑмлӑн тӳссе ирттерни ҫинчен калать. Произведени ячӗ те паттӑрсен кун-ҫулне, атте-аннесен ҫирӗплӗхӗ, чӑтӑмлӑхӗ йӑхран-йӑха куҫтӑр, вӗсем курнӑ хурлӑх тек нихҫан та ан килтӗр тет. Поэмӑри тӗп сӑнар - Елчӗк районе кӗрекен Тӳскел ялӗнчи Зина Нягина доярка. Вӑл ҫамрӑклах амӑшне ӗне сума пулӑшать, йывӑр ӗҫре пиҫӗхет унӑн кӑмӑлӗ, чунӗ.

«Пӗчӗк Роза» очеркра та ӗҫе чунтан парӑннӑ ҫын сӑнарне куратпӑр.

Асӑннӑ икӗ произведение, хальхи куҫла пӑхсан, кӑшт кивелнӗ теме пултаратпӑр. Апла пулин те вӗсене В. Урташ пултарулӑхӗнчен кӑларса пӑрахаймӑн. Вӗсем поэт аталаннине, мӗнле темӑсем юратнине, ӳсӗмӗсемпе йӑвашлӑхне ӑнланса илме пулӑшаҫҫӗ.

В. Урташ сатирӑра та ӗҫлесе пӑхнӑ. 1969 ҫулта унӑн «Сӑрӑ хурт» ятлӑ кӗнеки пичетленсе тухнӑ. Ун чухнех пултаруллӑ сӑвӑҫ-юрӑҫ ятне илтнӗ поэт сатирӑра та сас пани, паллах, ҫӗнӗ япала ӗнтӗ. Ку сӑвӑҫ яланах шыравра пулнине кӑтартать-тӑр, автор хӑйӗн пултарулӑхне тӗрлӗ жанрта тӗрӗслесе пӑхнине систерет-тӗр.

«Сӑрӑ хурт» кӗнекере 12 сӑвӑпа пӗр поэма. Кашниех тӗрлӗ ыйтӑва хускатать. Хайлавсем хӑйсемшӗн ҫеҫ тӑрӑшакансене, тӳр кӑмӑллӑн пурӑнма пӗлмен ҫынсене питлекен, пур тасамарлӑха тӑрӑ шыв ҫине кӑларма пулӑшакан шухӑшпа пӗрлешеҫҫӗ.

В. Урташӑн «Капкӑн» журналта та чылай сӑвӑ пичетленнӗ. Вӗсем автор сатирӑра та ӑнӑҫлӑ утӑмсем тума пултарнине ҫирӗплетрӗҫ.

В.Урташ сатира жанрӗпе нумай ӗҫлеймен. Тен, ку ӗҫре вӑл тирпейсӗртерех те пулнӑ пуль: сӑмаха ытлашши вылятни, ассонанс, аллитераци мелӗсемпе ҫине-ҫине усӑ курни. Ҫапах та вӑл ҫырнисем чӑваш сатиринче палӑрса тӑраҫҫӗ.

Сӑввисем фольклор тӗслӗхӗсене ҫывӑх, вӗсем поэтӑмӑр халӑх пултарулӑхӗнчен вӑй илнине тепӗр хут ҫирӗплетеҫҫӗ.

# Урташăн сăвă тĕнчи



В. Урташăн сăвă тĕнчи ытти поэтсенчен питрех уйрăлса тăрать тени тĕрĕсех мар пулĕччĕ: хăй палăртнă тăрăх, вăл ытти сăвăçсенчен нумай вĕреннĕ, халăх сăмахлăхне тăрăшсах тĕпченĕ, поэзи тĕнчине пĕтĕмпех кĕрсе кайиччен прозăпа, куçарупа, журналистикăра чылаях тăрмашса пăхнă. Чунра кăварланса тăни вара çиеле тапса тухнă тухнах, çулăмланса çунма тытăннă: Урташ хăй хыççăн çав тери паха сăвăсем, юрă сăввисем хăварнă.

Пытармалли çук, пĕлӳ шайĕ пĕчĕк пулнă Урташăн. Вал вăтам шкулăн çичĕ класне çеç вĕренсе пĕтернĕ. Вăрçă умĕнхи лару-тăрура ытларах кил пирки шухăшланă, ытти тантăшĕсем пекех ял хуçалăхĕнче тăрăшнă, кĕтӳ кĕтнĕ,

кăшт та пулин укçа-тенкĕ ĕçлесе илес тесе ытти ĕçсене явăçнă. Вăрçă хыççăн та малалла вĕренме пӳрмен Урташа: сывлăх хавшани ура хурса, такăнтарсах пынă.

«Унăн сăввисем ăслайса мар, чунран шăранса тухнă», - тенĕччĕ Чăваш халăх поэчĕ Ю.Сементер.

Эппин, Урташăн сăввисене ăнланса илес тесен хăвăн та Урташла пулмалла. Пулайăпăр-и?! Çак ыйтура пытарăнса тăмасть-ши Урташăн сăвă тĕнчийĕн тупсăмĕ?

Малтанхи вăхăтра В.Урташăн илемлĕх ăсталăхĕ (стилĕ) пирки тĕпчевçĕсем çула май тенĕ евĕр çеç икĕ-виçĕ предложенипе палăртнă. 1986 çулта Чăваш Гуманитари Институчĕ кăларнă «Художественное мастерство чувашских писателей» кĕнекере Л.М.Волков «Художественные особенности поэзии В Урдаша» ятлă статьяра пирвайхи хут Урташ поэзийĕн илемлĕхĕ пирки пĕтĕмлетӳллĕ шухăшсем каланă. Автор унта Р.Чепуновăн «Урташ сăввисем» ятлă тĕпчевĕпе усă курни сисĕнет, çапах та Л.Волков çырнинче ăслăлăх шайĕ пысăк, пĕтĕмлетĕвĕсем те поэт пултарулăхĕн пĕтĕм анлăшне ӳкереççĕ.

1986 çулччен В.Урташ ăсталăхĕ пирки «ик-виç предложенипе» палăртнă шухăшсене тепĕр хут пăхса тухар-ха:

«...Юрă сăмахĕсем çыракансенчен чи малтан В. Урташа асăнмалла: унăн нумай–нумай сăвви юрă пулмах çуралнă тейĕн!

В.Урташ чĕлхе мелĕсемпе: сăмах çаврăнăшĕ тумалли майсемпе, инверси мелĕсемпе т.ыт.те – ăста усă курса, чĕрĕ сăнлăхсем тума пĕлет» (Чăваш совет литератури. Шупашкар, 44 стр.)

«Валентин Урташ поэзийĕн хăйĕн уйрăмлăхĕсем пур. Вĕсем юрра çывăх тăраççĕ. Сăнарлă та сĕтеклĕ чĕлхе, вырăнлă повторсемпе ăнăçлă параллелизм унăн сăввисене асра юлмалла тăваççĕ», - тет Ю.С.Семенов (Сементер).

«Чĕлхене сăнарлă тума халăхран вĕренсе пыни хамăр ӳсĕмри çамрăксен творчествинче те лайăх курăнать. Чăваш поэзине вăрçă хыççăн килнĕ Валентин Урташ юррисăввисенче вăл уйрăмах хытă палăрчĕ. Сăвăç хăйĕн сăввисене халăх юррисем евĕрлĕ тума кăмăлланине ырлама

çеç пултаратпăр. Урташ сăввисем çăмăллăн, кĕвĕллĕн юрланса вуланаççĕ. Çавăнпа вĕсене халăх юратса вулать те, юрлать те», - тет чăваш халăх писателĕА.Артемьев.

В.Урташ пултарулăхĕ халăх сăмахлăхне çывăх тăрать, палăртаççĕ тĕпчевçĕсем. Уйрăмах вăл сăввисенче курăнать.Çакна произведенисен чĕлхи те,композицийĕпе сюжечĕ те,сăнарлăхĕ те çирĕплетет. Чĕлхе тенĕрен, Урташ сăввисен уçăмлăхне асăрхамасăр иртейместĕн. Произведенисене вулатăн та – пурте ăнланмалла. Кашни сăмахĕ хăйĕн вырăнĕнче. «Юрăран пĕр сăмахне те кăлараймăн» тенĕ евĕрех, Урташ сăввисенче сăмахпа сăмах , йĕркепе йĕрке, строфапа строфа уйрăлми çыхăнса тăраççĕ», - тет чăваш халах поэчĕ Ю.Сементер.

Урташ сăввисене вуласассăн «Кунта мĕн çырнă-ши?» тесе пуçа ватмалла мар. Весенче пĕр сăмах та ытлашши çук, сахалпах чи кирлине калană:

Укăлча умĕнче шурă хурăн,
Укăлча умĕнче сирĕн кил.
Хурăнсен айĕнче савнă вырăн,
Тусăм, эсĕ тусна, тусна аса ил.
(Укăлча умĕнче)

Е тата:

Ĕмĕтĕмĕр çитсе пынăран,
Телейĕмĕр çитсе тăнăран,
Пĕр-пĕрне курсассăн тус-тăван,
Юрлама та савăнма аванĕ
(Ĕмĕтĕмĕр çитсе пынăран).

Виçĕ-тăвата çаврăмлă сăвă яланах пĕр пĕтĕм пĕрлĕх пулса пĕр шухăша палăртать. Çавăнпа та пĕр сăмахне, пĕр çаврине те кăларса пăрахаймăн –илемĕ чакать, шухăшĕ пăтрашăнать.

В. Урташ тăван чĕлхене тăрăшса вĕреннĕ. Литературăлла Тăхăрьялта сăмах вăйне туйса ÿсни, юнлă вăрçăра

кăмăлĕпе те чунĕпе пиçĕхни, халăхпа пĕрле пулни, фольклор тĕслĕхĕсене çине тăрса тĕпчени пултарулăхне туллилетсе, пуянлатса тăнă. Халăх юрри-сăввинчен вăй илсе çунат сарнă поэт çапла каланă:

Тăван чĕлхем,
Чунри хĕлхем,
Аттем чĕлхи,
Аннем чĕлхи.

В.Урташ хамăрăн аслă поэтсенчен те сахал мар вĕреннĕ. К.Иванов, Çеçпĕл Мишши пултарулăхĕсемпе интересленнĕ. Уйрăмах Çеçпĕл Мишши сăввисене ăша хывнă вăл.

Катаран каç килсен,
Тухăçран ир килсен,
Хĕл иртсен,
Çур килсен,
Шурă юр ирĕлсен,
Кăн-кăвак çеçкесем
Куçăма илĕртсен,
Çеçпĕл ман умăмра,
Çеçпĕл ман чунăмра, -

тет поэт çакна палăртса. Ахăртнех, Урташ «Çеçпĕл ман чунăмра» сăвă çырнă пулас. Шел, çак вариантсăр пуçне урăх нимĕн те тупăнмарĕ.

Чăваш чĕлхинче сăнарлăх мелĕсем питĕ нумай. Вĕрен, тĕпче, суйла. Халăхăн ĕмĕрсем хушши упраннă сăвви-юррисем– тĕслĕхшĕн чи паха çăлкуçсем.

Поэт чĕлхене сăнарлă та витĕмлĕ тумалли илемлĕх мелĕсемпе туллин усă курнă тесен тĕрĕсех пулмĕччĕ. Ытла нумаях та мар вĕсем. Вырăн-вырăнĕпе курмастпăр та-и вĕсене. Пулсассăн та, куç умĕнче выртмаççĕ. Сăвă шухăшне витĕмлĕрех, паллăрах тăвас тенĕ чухне çеç автор

кирлине суйласа илет, ҫип ҫине ахах тирнĕ пек пит меллĕн вырнаҫтарса тухать.

В.Урташ тропсенчен аллитерацисемпе ассонанссене кăмăлланине чылай сăввинчен туйса илетпĕр:

Эс, ҫуралнă ҫĕршыв, тăванран та тăван,-
Тăванран уйрăлан – уйрăлмастăн санран,
Эп ăҫта - ҫавăнта эс пыран,
Юррăмсем ҫук ҫĕрте эсĕ юрă пулан.
Пурнăҫ йӳҫĕ пулсан-эсе тутлă тăван,
Эс, тăванăм, ҫĕршыв, тăванран та тăван.
(Тăванран та тăван).

Ҫу кунĕнче калас сăмахăма
Кĕрхи каҫсем валли сыхларăм.
Кĕрхи каҫсем ҫитсен, сана курсассăн,
Хĕр куҫĕнчен пăхма хăймарăм.
Калаймарăм калас сăмахăма
Хамăнах та савнă тусăма.
(Калаймарăм)

Кун пек тĕслĕхсем татах та илсе кăтартма пулатчĕ. Аллитерацисем сăвăсенче пĕр пек тĕл пулмаҫҫĕ – хăшĕсенче сахалрах, асăннă сăвăсенче, асăрхарăмăр, питĕ пуян. Автор вĕсемпе ытла сапаланмасть, вырăнлă та пĕлсе усă курать. Аллитерацисем сăвва илемлетме те, шухăш интонацине вăйлатма та кирлĕ. Асăрхăр:

Автомат-хăямат
Хăй ĕҫне хăй тăвать.

Сасăсен килешӳллĕхĕ «автомат хăй ĕҫне хай тăвать» иккенне ĕнентерет. Ассонанссемпе аллитераци мелĕсем сăвă рифмине йĕркелесе тăма та пулăшаҫҫĕ. Урташăн сăввисенчи рифма сăмах вĕҫĕнче ҫеҫ мар, пуҫламăшĕнче те, варринче те пурри сисĕнет. Пĕр евĕрлĕ янăравлăхпа сăвăҫ хăй калас тенине тата та илемлĕрех, витĕмлĕрех тăвать.

Ĕмĕтĕмĕр çитсе пынăран
Телейĕмĕр çитсе тăнăран.
(Ĕмĕтĕмĕр çитсе пынăран)

В.Урташăн рифмипе ритмĕсем халăх пултарулăхĕнчи такмаксемпе, юрăсемпе пĕр кĕвĕллĕ:

Ĕмĕтĕмĕр çитсе пынăран
Вĕçсе каяссăм килет
Уйăх çине, çăлтăр çине
Çитсе килессĕм килет.
(Ĕмĕтĕмĕр çитсе пынăран)

Чĕлхене сăнарлĕ та сĕтеклĕ тумалли тепĕр мел – танлаштару. Поэт çырнă сăвăсенче вăл ытла нумаях мар. Ытларах юрату лирикинче тĕл пулать. Сăвăç -ши татăкпа ăнăçлă танлаштарусем тупма пĕлнĕ:

Кĕмĕл-ши эс, Раккасси,
Ылттăн-ши эс, Раккасси,
Хĕртсе хĕвел пăхнă чухне,
Юрă пуль эс, Раккасси.

Тӳрĕ анлă танлаштару тĕслĕхĕ:

Çеçкереччĕ палан,
Çеçкереччĕ шăлан,
Шăпчăксем вăрататчĕç пире.
Шухăшлаттăм ялан
Тĕл пулма санпалан,
Тыр акма эп тухаттăм хире.
(Пиçсе çитрĕ палан)

Тӳрĕ анлă танлаштарупа çут çанталăкри пулăмсемпе лирикăллă герой ĕмĕчĕ, юратăвĕ, шухăш-кăмăлĕ пĕр кĕвĕллĕ пулнине сăнарлама меллĕ. Çакна туйнă та Урташ:

Тухăçран хăпарсан шурăмпуç,
Кĕр автанĕ çапсан çунатне -
Килме пулнăччĕ эс, савнă тус,
Колхозри сар хĕрсен уявне.

В. Урташ лирикинче чĕрĕлĕтӳ (олицетворени) мелĕ анлă сарăлнă. Акă лирикăлла герой шухăш-кăмăлне çутçанталăк пулăмĕсемпе пĕр шайра сăнлани:

Ма шавлать-ши пирĕн Чăнлă,
Мĕн калать-ши шыв сикки?
Çитрĕ, тет пуль , кĕтнĕ чăнлăх,
Çук халь, тет пуль, ман пекки.

Чăн шавлать пуль пирĕн Чăнлă,-
Чăнлăха юратнăран.
Çуркунне пулать вăл чунлă,-
Хĕл çитсен сывлать аран.

(Пирĕн Чăнлă)

Аякран курăнать шурă шупăр,
Шурă шупăр уртать улмуççи.
Юрласам, калаççам, сĕрме купăс,
Эсĕ ман чун савни, чун уççи.

(Сĕрме купăс)

Çамрăк чух кам ыйăхне татман пуль
Шупашкарăн лăпкă каçĕсем.
(Шупашкарăн лăпкă каçĕсем).

Сăвăç эпитетпа, метафорăпа, антитезăпа пĕлсе, творчествăлла усă курнă. Кашни тĕслĕхрех илемлĕхпе сăнарлăх мелĕсем пĕр пĕтĕм пĕрлĕх пулса сăвва чĕрĕ сăн кĕртеççĕ.

В. Урташ сăввисен синтаксисĕ сăнарлăха ӳстерет, шухăш-туйăма витĕмлĕрех ӳкерет. Акă, повторсен паха тĕслĕхĕсем:

Савнишĕн эп пултăм сар каччă,
Тăшманшăн эп пултăм арслан.
Ун чухне эп салтакчĕ, çартаччĕ.
Çĕре тăрмалатчĕ тăхлан.
Тăшманăн кун-çулĕ ăнмарĕ,-
Вутра-и çунмарĕ тăшман.
Ман шанчăк вутра та çунмарĕ,
Тен, эсĕ çунмашкăн хушман.
(Юрра юрату çуратать)

Сăвă танлаштару, эпитет, ассонанс, аллитераци мелĕсемпе пуяннине каламăпăр та (куç умĕнче), «эп пултăм; тăшман; вутра; çунмарĕ» сăмахсем икшер хут янăраса шухăша татах та витĕмлĕрех ўкереççĕ. Шухăш интонацийĕ çав сăмахсен тĕлĕнче вăйлă, янăравлă.

«Пурăнас килет» поэмăри пĕрремĕш çавра пĕтĕмпех повторсенчен тăрать темелле. Йăлăхтарать-и ку - çук!

Эс ан ман çĕршыва,
Эс ан ман халăхна,
Хăв аннў кăкăрне,
Хăв аçу çăкăрне.
Вăл суратнă сана
Вăл ўстернĕ сана.
Çăлтăрсен çутинче,
Сар хĕвел ăшшинче:
Вăл ўстернĕ сана,
Вăл вĕрентнĕ сана
Сыхлама юратма
Советсен çĕршывне.

«Ан манăр!» сăвăра та повторсем нумай. Вĕсем чан сасси евĕрех янăраççĕ:

Тĕнче манмасть хăй çуннă кунсене.
Çын пĕтнине, çын тўснине ан манăр!
Вилнисене курса, сыхлар чĕррисене,-

Çапăçса мар, ĕçрен килсессĕн канăр.
Куç шăрçи евĕр усрар тĕнчене,
Çут тĕнчене вутра çунма ан парăр.
Çын суранне, чун суранне ан манăр.

Кунта «ан манăр» сăмахсем икĕ хут çеç тĕл пулаççĕ (сăвăра - виçĕ хут) апла пулин те, кашни строфа, кашни йĕрке «Ан манăр!» текен шухăшпа витерĕннĕ. Повторсем «Пуласси –татах та çутă пулĕ», «Мĕн тăван», «Эпир вилмен», «Çĕршыва хăтарасшăн» тата ытти нумай сăвăра тĕл пулаççĕ.

Предложенисене ыйту-хурав, ĕмĕт-тĕллев, çирĕплетӳ евĕрлĕ йĕркеленине асăрхатăн:

Мĕншĕн чун туртать-ши тетпĕр,
Аслă Атăл хĕррине.
Эх, ăçта курас-ши, тетпĕр,
Юратсассăн пĕр-пĕрне.
(Шупашкар хĕрĕсем)

Юрласа сатин, сатин тĕртеççĕ
Шупашкарăн хитре хĕрĕсем.
Эх, мĕн-ма-ши, эх, мĕн-ма-ши илĕртеççĕ
Çил çунатлă çепĕç юррисем?
(Юрласа сатин тĕртеççĕ)

Çунат хушассăм килет,
Шăпчăк пулассăм килет,
Садран сада çӳре-çӳре,
Юрă юрлассăм килет.

Ик çунатăм çук–и ман,
Шăпчăк сасси çук-и ман,
Садран сада çӳремешкĕн
Сад пек çĕршыв çук-и ман.
(Çунат хушассăм килет)

В. Урташăн чылай сăвви халăх сăвви-юрри пекех сюжетлă. «Аннемĕр сăмахĕ», «Тăван уй-хир», «Малтанхи кĕнеке», «Мĕн тăван» сăвăсем пĕчĕк поэмăсем пек вуланаççĕ.

Поэт сăввисен илемлĕхĕпе сăнарлăхĕ содержанипе (шухăшĕпе) уйрăлми тачă çыхăннă. Поэзийĕ уçăмлă. Çав уçăмлăхра этеме юрлама та, савăнтарма та, хурлантарма та, ĕмĕтленме те, поэт хăй калашле, çунат хушма та хавхалантаракан асамлă вăй пур.

## Урташ калавĕсем

Валентин Урташ пултарулăхĕ нумай енлĕ. Вăл - поэт та, новеллист та, журналист та. Поэт пултарулăхне çутатакан статьясем чылай. 1978 çулта Чăваш телевидениййĕ Сенкер экран çине «Ăраскал» ятла киноочерк кăларчĕ. Унта янăранă сăвăсем, юрăсем поэт пултарулăхне витĕмлĕн, ĕнентерӳллĕн кăтартрĕç. 1995 çулта В.Урдаш пултарулăхĕ пирки «Укăлча умĕнче»телеочерк тухрĕ. Авторĕ, С. Асамат, сăвăç кун-çулĕпе литературăри ăсталăхĕ пирки чылай интереслĕ шухăш каларĕ, кăтартрĕ. Çапах та, тăватă пайран тăракан передачăн çитменлĕхĕсем те пулчĕç, вĕсем пирки «Хыпар» хаçатра Р. Чепуновăн асăрхаттаруллă статйи пичетленчĕ.

Валентин Урташ сăвă çырассине яланах тĕпе хунă. Сăвă хайласси ачаллах тĕвĕленнине тăванĕсем те, юлташĕсем те каласа панисенчен пĕлетпĕр. Вăрçăран аманса таврăннă хыççăн Валентин Яковлев Хусанта тухса тăнă «Хĕрлĕ ялав» хаçат редакцийĕнче ĕçленĕ. Шупашкара килсен Чăвашрадиора тăрăшнă. Вăрçă асапне, тертне чылай курнă, тӳссе ирттернĕ поэт хăй мĕн курни-илтнине вулакан патне çитересшĕн çуннă. «Тăван Атăл» журналăн 1944 çулхи 19-мĕш кĕнекинче «Çапăçу хирĕнче.Адельзян» ятлă калавĕ пичетленсе тухать. 1951 çулта чи лайăх калавĕсене пухса пирвайхи кĕнекине «Çурхи кунсем» ятпа вулакан патне çитереççĕ. Проза жанрĕпе ĕçлесси кайран та таталмасть, уйрăмах очерксем çырас енĕпе пысăк ăсталăх кăтартать вăл. Вырăсларан чăвашла куçарас енĕпе те тăрăшать. «В.Каверинăн «Икĕ капитан» повĕçне, Стифен Миканăн «Çĕр процентлă американец»не, Алмаз Манасыповăн «Кил ман пата», А.Мусатовăн «Стоксар», Чанг Тимăн «Савнипе калаçни» хайлавĕсене, С.Михалковăн «Сомбреро» пьесине куçарса пичете хатĕрлесе парать.

Унăн калавĕсенчи тĕп сăнар – совет çынни. Аса илӳ формипе йĕркеленĕ произведенисем ытларах Аслă Отечественнăй вăрçă темипе çыхăннă. Кашни калаврах Тăван çĕршыв салтакĕ тăшмана хирĕç вирлĕн кĕрешнине, вăрçăн тертлĕ çулне кĕскетессишĕн, çĕнтерӳшĕн пурнăçне шеллемесĕр çапăçнине куратпăр. Акă, «Сенкер чечек» калаври Сурбановпа Данилов, «Юлташ сăмахĕ»новелăри Гаврик сăнарĕсем Тăван çĕршыва юратма чĕнеççĕ. Кашнинчех патриотизм туйăмĕ, туслăх хăвачĕ тапса тăрать.

«Сенкер чечек» калавăн сюжетне йĕрлер-ха: çамрăк салтаксене вăрçа кĕрес умĕн çар ĕçне вĕрентеççĕ. Акă Данилов хушаматлă салтак. Кам-ха вăл? Ĕнерхи ял çынни. Малтанласа вăтанчăксер. Сурбанов старшина пулăшнипе вăл часах пултаруллă салтак пулса тăрать. Çапăçура йывăрлăхран хăрамасть, çухалса та каймасть. Гранатăпа икĕ фашиста пĕтерет, пульăсем шăхăрнине пăхмасăрах йывăрлăха лекнĕ Сурбанова пулăшмаваскать. Çапăçура Тамара ятлă санитарка аманать. Ун умне килсе тухнă нимĕçе те Данилов автоматран çулса тăкать.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчи пĕр эпизода илсе Валентин Урташ «Çил арманĕ» калав çырнă. Сюжечĕ ансат. Çил арманĕнчен икĕ çамрăк, Ленăпа Çемен, аслă çулпа иртекен тăшмана сăнаççĕ. Мĕн курнине раципе артиллеристсене пĕлтерсе тăраççĕ. Сывлăша тăшман салтакĕсем, хĕçпăшалĕсем сирпĕнеççĕ. Çамрăксен паттăрлăхĕпе хавхаланнă боецсем фашистсене ялтан хӳтерсе кăлараççĕ, нумайăшне тĕп тăваççĕ, тăшмана хăваласа анăçалла васкаççĕ. Калава пуçламăшĕнчен вĕçне çитиех сывлăш çавăрми тенĕ пек вуласа тухатăн.

Авторăн чи ăнăçлă калавĕсенчен пĕри «Юрă хăвачĕ» ятлă. Вăл «Вăрçă калавĕсем» кĕнекере тата «Ялав» журналта пичетленнĕ. Нимĕç фашисчĕ хуçаланакан совет çĕрĕ çинче совет çыннисем чура пулманни, пуç усманни çинчен вăл.

Калаври тĕп сăнар - совет партизанĕ Назар мучи. Тăшман аллине çаклансан та парăнмасть вăл. Хăйне çакса вĕлерес умĕн ял халăхне хавхалантарса Тăван çĕршыв

çинчен юрă пуçлать. Ăна кура ял халăхĕ те юрра малалла янраттарать. Партизансем илтеççĕ çакна, ял çыннисене ирĕке кăлараççĕ. Юрă вăл, кирлĕ чухне, салтак та, тупă та, пăшал та, тет автор.

«Пурнас килет». Çакăн пек сăвă кĕнеки пур Урташăн. Телейлĕ те ирĕклĕ пурнăçа мухтакан сăвăсем кĕнĕ унта. Пурнăçа мухтаса, пурнăçа савса пурăнма чĕнекен тепĕр произведени - «Юлташ сăмахĕ» новелла.

«... Итле, юлташăм, - терĕ вăл мана хулпуççинчен турткаласа, - итле! – Юнашар садра , унăн сăмахĕсене илтнĕ пекех , юрăç шăпчăксем чăрсăррăн шăхăрттарса юрă-сăвă шăрçалама тытăнчĕç. Таçтан, çав самантрах, хуткупăс кĕвви илтĕнсе кайрĕ. Пирĕншĕн вара, аякра-аякра вăрçă шавĕ кĕрлесе тăнине мантарса яракан илемлĕ пурнăç кĕвви пĕр вĕçĕмсĕр янăраса тăнăн туйăнчĕ...»

Е тата çак йĕркесене илсе пăхар:

«- Пурăнас килет, юлташăм ! - Çук ку сăмахсене вăл хурланса мар, шалтан, чĕререн тухакан савăнăçлă сасăпа, пĕтĕм чун хавалĕпе каларĕ...»

Çак сăмахсенче авторăн чăн çулĕ, позицийĕ. Пурнăçра темле йывăр пулсан та пуç усма юраманни çинчен калать вăл. Писателен тĕллевĕ паллă: пурнăçшăн, Тăван çĕршвшăн кĕрешмелле.

Новеллăра 14 çулхи ачапа, Гаврикпа, паллашатпăр. Вăл çулне кура мар паттăр ĕç тунă, тăшман пулеметне гранатăпа сывлăша сирпĕтнĕ. Кайран та партизансен отрядĕнче икĕ çул хушши тăшмана хирĕç кĕрешет. Йывăр аманнă хыççăн госпитатльте сипленет. Сывалса тухсан каллех тăшмана аркатма каясшăн.

Гаврик сăнарĕ пире вăрçă вăхăтĕнче ачасем те тăшмана хирĕç паттăррăн кĕрешнине аса илтерет.

Урташ калавĕсен тĕп уйрăмлăхĕ- чĕлхи çăмăл пулни, тĕп шухăша лирикăлă чарăнусемпе калани.

«Этем тени çĕре хăйĕн вăйĕпе, хăйĕн тарĕпе, чунĕпе илемлетет. Анчах.... Çав паттăрсем... Çĕр паттăрсен вăйĕпе илемленет тесен, тĕрĕсрех пулмĕ-ши? Тырă вăл паттăрсен

вăйĕпе, çĕнтерекенсен вăйĕпе ӳссе çитĕннĕ, ĕлккенленнĕ. Çав çĕре вĕсем хăйсен юнĕпе, пурнăçĕпе хӳтĕлесе хăварнă. Вĕсем хăйсен илемлĕ кун-çулне парса çĕр илемне, хăйсенчен сывă юлнă çынсен пурнăçĕн илемне сыхланă. Акă камсен ячĕпе чупаççĕ иккен ылтăн хумсем, акă мĕншĕн ылтăн тулă ирĕклĕн, илемлĕн, йывăррăн хумханать иккен».

Ку йĕркесене «Тулă хумханать» калавран илнĕ. Вăрçă хыççăнхи совет çыннин шухăш-кăмăлĕ, ĕмĕчĕ тухса тăрать кунта. Хастар ĕçре çĕршыв хăватланать, ӳсет, илемленет.

Тăван çĕршывшăн çапăçса вилнĕ паттăрсене никам та манмасть. Чĕррисем вилнисен ячĕпе ĕçре çитĕнӳсем тăваççĕ, паттăрлăхпа хастарлăх кăтартаççĕ. Çак шухăша Урташ «Хамăрăн» калавра çирĕплетет.

Авторăн калавĕсенче кĕвĕлĕх те лайăх палăрать. Çăмăл вуланаççĕ вĕсем. Йĕркисем шăрçа пек куç умĕнчен иртеççĕ те сăнарлă ӳкерчĕк туса хăвараççĕ. Акă мĕнле янăраççĕ вĕсем:

«Куç умĕнче сап-сарă ылтăн пек тулă пусси, сулмаклă та пĕрер шитлĕ пучахсем вăштăр-вăштăр килекен çилпеле пĕр –пĕрин çумне перĕнеççĕ, ачашшăн сĕртĕнсе калаçнă пек, чăштăртатса лараççĕ. Юнашар пекех ыраш пусси! Тырри куçа çиет, чуна çĕклентерет! («Тулă хумханать»).

Валентин Урташ ăста очеркист пулнине те палăртмалла. Çул çӳренĕ чухне республикăри колхозсемпе совхозсенче, ялсемпе хуласенче,фабрикăсемпе заводсенче еçчен çынсемпе нумай тĕл пулса калаçнă, вĕсен ĕçĕпе интересленнĕ. Район хаçачĕсенче, республикăра тухса тăракан журналсемпе хаçатсенче час-часах очерксем пичетленĕ. Вĕсенче вăл колхозлă ялăн пурнăçне сăнлать, хастар ĕçченсемпе паллаштарать. Пурнăçра тĕл пулакан юрăхсăр пулăмсене питлет.

«Пыл хурчĕсем», «Йĕтем çинче», «Çамрăк чĕресем», «Уй-хир тăрăх», «Вĕсем хăмла тăваçĕ», «Халăх юратсан», «Ял илемĕ», «Ял çĕкленет» - çапла ят панă В.Урташ хăйĕн очеркĕсене. Акă тата «Пирĕн ялăн, савнă ялăн...», «Вăрман паттăрĕсем», «Вырмара» тата ытти очерксем. Вĕсем ял пурнăçĕ, колхоз ĕçченĕсем иккенни тӳрех паллă. В.Урташ,

чăнах та, ытларах уй-хир ăстисем ҫинчен ҫырнă. Колхоз председателĕ-и, сысна пăхакан-и, доярка-и, тракторист-и, хăмлаҫă-и - пур геройсен сăнарĕсене витĕмлĕ, чĕрĕ чĕлхепе ӳкерсе панă. Пур геройсене те хĕрӳ ĕҫре, хутшăнусенче кăтартнă. Акă, «Паянхи паттăрсем»очерк. Вăл 1971 ҫулта «Ялавăн» 6-мĕш номерĕнче пичетленнĕ. Ҫак очеркра Урташ Елчĕк районĕнчи «Прогресс» колхоз ҫинчен каласа парать. Хуҫалăха ҫĕклессишĕн ырми-канми тăрăшакан колхоз председателĕн сăнарне лайăх ӳкерсе кăтартнă. Аса илӳ формипе усă курса хальхи хуҫалăх пурнăҫне вăрҫăченхи, вăрҫă хыҫҫăнхи пурнăҫпа танлаштарса очерка хăйне евĕрле сăн кĕртни ҫав тери паха. Тăван тавралăх сăн-сăпачĕ, колхозниксен килти хуҫалăхсем ҫинчен ҫырни те очерк пахалăхне ӳстерет. Ҫапла, автор пĕчĕк очеркрах пысăк шухăш калама пĕлнĕ.

Ялпа хулана тухса ҫӳреме юратакан писатель хăй курни-илтни ҫинчен ҫырма юратнă. Урташ тематики пĕр ял пурнăҫĕпе ҫеҫ ҫыхăнмасть. Вăл ҫырнă очерксенче – пиравăр ăстисем, вăрман, ҫул-йĕр ĕҫченĕсем. Очерксен географийĕ те анлă. Писатель чăвашсем пурăнакан кӳршĕллĕ республикăсемпе облаҫсене тухса ҫӳренĕ. Инҫетри хуласемпе ялсенчен хатĕр статьясемпе, очерксемпе тавраннă. Журналист ĕҫĕпе ҫӳренĕ вăхăтрах вăл халăх хушшинче тăван литературăна пропагандăлас ĕҫе те хастар хутшăннă. Пархатарлă ĕҫсемшĕн ăна 1972 ҫулта «Отличник культурного шефства над селом» значокпа наградăлаççĕ.

Валентин Урташ прози - уҫăмлă сăнарлăхла, мал ĕмĕтлĕ шухăшпа, сĕтĕклĕ чĕлхепе палăрса тăракан проза. Унăн туртăмĕсем поэтăн халăхăмăрта анлăн саралнă сăввиюррин ҫĕкленӳллĕ кăмăл-туйăмне ҫывăх тăраççĕ.



## Урташ синкерĕ

... «Урташăн та çын çинче çын пек курăнас килмен-им-ха? Çакна вара пиртен чылайăшĕ ăнланасшăн пулман. Унсăр вăл «Чăлах çынна кирлех-ши хурлама, чăлах çынсем пулаççĕ çепĕç чунлă. Пĕр сăмахран пуçлаççĕ хурланма – сăмахĕсем суран пек юнлă», -тесе кулянса çырман пулĕччĕ.

В.Урташ суранĕсем ыратнине самантлăха та пулин, уйрăмах çанталăк улшăнас умĕн, манас тесе эрех черккине тытнă самантсем те сахал мар пулнă, анчах, шел, чылай чухне унăн чунĕ вутра тенĕ пек çуннă самантсенче юнашар пулса, ăна ăнланса лăплантаракан, хал-хавас парса тăракан кирлĕ çын пулман. Теприсем тата поэтăн ахаль те чуна пырса тивмелле ыратакан суранĕсем çине хăйсен тăварлă сăмахĕсене сапсах тăнă. Этем тимĕр мар вĕт, тимĕр те татăлать.

Пиртен чылайăшĕ поэт трагедине ăнланса илеймен-ха. Эпир чылай чухне çиелте мĕн курăнса выртать - çавна çеç асăрхама хăнăхнă. Поэт хăй пĕччен çеç юлсан, вăрăм та кичем каçсенче хăйне ытти тĕрĕс-тĕкел çынсемпе танлаштарса чĕрине çулăмпа çунтарнă самантсене пĕрре те шута илесшĕн мар. Унăн çынсене, халăха, хĕрсене хăйне савтарас килмен-и, юррисемшĕн чуна ăшăтакан тав

сăмахĕсем кĕтсе тĕмсĕлмен-им? Кăна вăл хăй кăна пĕлнĕ, çынна çеç кăтартман.

Коммунистсен тоталитарлă пурнăç йĕрки çунат çапса тенĕ пек юрлама ĕмĕтленекен поэта та унăн чун-хавалне пĕрре мар çапа-çапа хуçнă, пĕри-партократин чиновникĕсене килĕшмен, вĕсен урапи çине ларман, ĕçке юратакан «пĕчĕк» çын, тепри вара – унăн сăвви-юррисене юрласа киленекен, пĕтĕм чăваш халăхĕ савакан юррипе шăпчăк саслă чăн-чăн В.Урташ сăвăç». (Р.Чепуновăн «Укăлча умĕнче» çуралнă шухăшсем») статйинчен.

Чăнах ĕнтĕ, çамрăклах вăрçăра пиçĕхнĕ, çилçунат чунлă сăвăçа вăл вăхăтри идеологи картинче пурăнма тата çырма тăвăртарах пулнă. «Капла ан çыр», «Кун пек ан çӳре». «Кунта сан йышшисем çук» евĕрлĕ сăмахсене сахал мар илтме тивнĕ ăна. Акă, «Ялавăн» 1961 çулхи 9-мĕш номерĕнче пичетленнĕ «Ĕмĕр юррине юрлас тесен» статья. В.Долгов критик В.Урташăн Сĕнтĕрвăрри районĕнче тухса тăнă «Ленин ялавĕ» хаçатра çапăннă «Çирĕммĕш ĕмĕр юрри» сăввине тишкерет. Çак статья Урташа ăнланса илме чылай пулăшать пулĕ тетĕп, çавăнпа ăна кăшт та пулин илсе кăтартни вырăнлă.

«...поэт мĕн çинчен çырать-ха? «Çирĕммĕш ĕмĕр юррине» кĕскен пăхса тухар-ха.

Тĕнчемĕршĕн çирĕммĕш ĕмĕр
Пуçланчĕ юнпа чыхăнса.
Патшашăн сахал-и, туссемĕр,
Çын пĕтнĕ шинель тăхăнса.
Яппун вăрçинче аттемĕр
Юн тăкнă, ютра аманса.
Юнпа пуçлансан та çĕн ĕмĕр
Ан пĕттĕр вутпа юн тăкса.

Вăрçă! Вăрçă... юн, вут... Анчах çакна кам пĕлмест: çирĕммĕш ĕмĕр вăрçăпа кăна пуçланмасть-çке! Çирĕммĕш ĕмĕр çинчен çырас тесен, унăн юррине юрлас тесен, вăрçăсене пĕлнисĕр пуçне тата çакна та пĕлмелле:

çирĕммĕш ĕмĕр тĕнчене хăватлăран та хăватлă вăй çуралса тухнă вăхăтра пуçланнă - çирĕммĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче Российăра Большевиксен партийĕ организациленнĕ, Аслă Ленин кăтартса пынă çулпа пырса, вăл пĕтĕм тĕнчипе чи вăйлă парти пулса тăнă... Тĕнчери коммунистла партисем пур çĕрте те социалла пусмăра пуçĕпех пĕтерессишĕн, империалистла вăрçăсене яланлăхах тĕп тăвассишĕн кĕрешеççĕ. Çакна курмасăр «Çирĕммĕш ĕмĕр юррине» юрлама çук». Малалла критик КПСС программи, рабочипе хресчен класĕ, коммунизм çинчен ăнлантарать. Сăвăçă «этемлĕх коммунизм патне пырас çула Ленинăн çутă генийĕ çутатса тăнине» курмасть, тет, унтан каллех ăс парать, вĕрентет:

«Поэт мир çинчен çырма хапăл турĕ пулсан, унăн халĕ, Коммунистсен партийĕ XXII съездне пухма хатĕрленнĕ кунсенче, ĕç çыннисем миршĕн мĕн тери паттăр кĕрешнине пĕлес пулать. (Сăмах май асăрхаттарар: сăвă авторĕ хăйĕн «Юрринче» мир çинчен ним те шарламасть). Чăн та, çирĕммĕш ĕмĕрте юнлă вăрçăсем сахал мар пулса иртнĕ, çапах та унăн, çак ĕмĕрте çуралнă çĕнĕ тĕнчен, юрри – мир юрри, Коммунизм юрри».

Сăвăри çак йĕркесемшĕн автора хытах лекнĕ:

«Çĕр хут та аманчĕ аттемĕр, ютран çĕр хут тухрĕ тарса». Сăвăри сăнар (аттемĕр) «паттăр салтак пулас вырăнне «çĕр хута юта» лекнине мухтать тенĕ автор -критик.«Юта çĕр хут лекни- пысăкран та пысăк намăс, (çĕр хут намăс)». 1941 çулхи вăрçăн пирвайхи кунĕсенче пин-пин салтак нимĕç фашисчĕсен тыткăнне лекнине пĕлмен те-ши критик?! Вĕсене патронсăр, тепĕр чухне пăшалсăрах, автоматлă, пулеметлă, танксемлĕ фашист эшкерĕсем çинелле кăларса янишĕн хăйсемех айăплă пулнă-ши? Вăрçăн малтанхи кунĕсенчех пин-пин салтак тăшман тыткăнне лекни «намăс» мар, синкерлĕх, çĕршыв синкерлĕхĕ пулнине сăвăç сăнарлăн пĕлтерме хăюлăх çитернĕ.

«Ан патăрччĕ çирĕммĕш ĕмĕр, юнпа унаса çăкăрне. Эпир çирĕпленнĕ, асаплăх ăс пана пире» йĕркесене те çивĕччĕн питлет критик. Сăвăç Социализмла Аслă Революции панă ырлăха пĕртте пĕлмест иккен. Совет çыннине «Аслă партии, марксизм-ленинизм вĕрентĕвĕ тĕрĕс çул-йĕрпе янă. Халĕ

тĕрлĕ асапран, хурлăхран ирĕклĕ совет çынни ăс-тăн тĕлĕшĕпе капитализм тĕнчинче пурăнакан кирек хăш чиновникрен те малалла тăрать?! (*В.Ц.*) Совет çынни коммунизм тăвать, коммунизм унăн ăсне, шухăшĕсене çĕнĕлле атлантарать, вăй парать, ĕмĕтне маллала чĕнет. Çакна шел те, сăвăç ăнланмасть, пĕлмест. «Çирĕммĕш ĕмĕр юррине юрлама унăн (Урташăн–*В.Ц.*) пĕлĕвĕ те, пултарулăхĕ те çитеймен».

Эппин, мĕн тумалла-ха сăвăçăн «Çирĕммĕш ĕмĕр шухăшне, ĕмĕтне, тĕллевне, юррине ăнланас тесен? Хальхи саманан Коммунистла Манифестне – КПСС Программин проектне (проектне – *В.Ц.*) вĕренсе пĕлес пулать, унăн пуянран та пуян шухăшне ăса илес, чĕрене хывас пулать».

Асăннă статья «Ялав» журналăн форзац страницинче вырнаçнă. Урташăн «Çирĕммĕш ĕмĕр юрри» сăввине Сĕнтĕрвăрри районĕнче пурăнакан çеç вуланă ĕнтĕ (Литературăпа ытти кăсăкланакансене шута илмесен) В.Долгов статйине 18000 чăваш ( «Ялава» çырăнса илекенсем) вуланă теме пултаратпăр. Юрать, хальхи куçпа пăхсан критик статйине демагогилле япала çеç тейĕпĕр.Анчах сăвăçăн çулне картламаллипех картланă вăл. Обществăшăн Урташĕ те, сăввисем те сиенлĕ пулнине унта-кунта пĕлтернĕ. Районсенче сăвăçа официалла майпа кĕтсе илмен, хаçатсенче пичетленме чăрмантарнă. Акă, Шупашкар район хаçатĕнче ĕçленĕ П.В. Васильев çапла аса илет: «В.Урташ сăвă парса хăварнăччĕ. Вуласа тухрăм та редактора кăтартмасăрах ( вăл çукчĕ) наборлама кайса патăм. Хаçат тухас умĕн редактор мана хăй патне чĕнтерчĕ.

«– Урташ сăввисене хаçатра пичетлеме юраманни çинчен обкомра питĕ хытă асăрхаттарчĕç, - терĕ. – Тавай, полосаран кăларса пăрах».

Юрать-ха,П.В.Васильев майне тупнă, сăвă айне Урташăн чăн хушаматне – Яковлев – лартса янă. Пенси укçипе çеç пурăнакан сăвăçа хутран-ситрен тивекен гонорар та тем пекех паха пулнă ĕнтĕ. Урташ тавра хăй пекех «пĕчĕк» çынсем нумай пулнă. Укçа пур-тăк – çурмалла,çук-тăк пĕрле тенĕ пекех пурăннă вăл.

Халăх юратăвне ун чухнех çĕнсе илнĕскер, Урташ маларах асăннă статья пеккисем хăйне йалтах пĕтерсе хурасса туйнă ĕнтĕ. Çавăнпа хӳтĕлев –сăвăсем çырма та ӳркенмен. Нумай мар вĕсем, идея тĕлĕшĕнчен таса , КПССа мухтакан, коммунизма ырлакан сăвăсем – хӳтĕлев сăвăсем, Ун пеккисене пĕрре ларсах темиçе те çырса хунă тейĕн – хутран-ситрен пичетленкеленĕ кĕнекисенче кашнинчех пур вĕсем: «Коммунистсем эпир, коммунистсем», «Ильич парни», «Аслă Ленин», «Коммунизм пулать» йышшисем. Вĕсене чаплă сăвăсем теейменĕн, анчах кирлĕ идейăна мухтанăран начар тесе те калаймăн. Пĕр «Ĕмĕтĕмĕр çитсе пынăран» çеç, юрă пулса тăнăран-ши, илемлĕн, сулмаклăн янăрать. Вĕсем Урташăн хӳтĕлев сăввисем пекех , хăш чухне çавсемех поэта ырласа-мухтаса каламалли сăлтавсем пулса тăраççĕ. Урташăн сăввисене юрра хывакансем пысăк премии лауреачĕсен ячĕсенех тивĕçеççĕ, сăвăçи çеç аяккинче тăрса юлнă. Курмаллине асăрхамăша пени никама та чыс тумасть.

Иван Ахрат çырнинчен: «...Сергевпа Урташ...

Çӳлтен сăнаса, тĕсесе тăракансемшĕн пĕрре те илĕртӳллĕ этемсем пулман вĕсем. Хăйсене евĕр кăмăлĕсем, йăли-йĕркисем, хăйсене ирĕккĕн тыткалани, никам куçĕнче те ытлашши тĕмсĕлсе пăхманни культурăн «сумлă» ĕçченĕсем хушшинче хăйсене тивĕçлĕ вырăна йышăнма май паман вĕсене. Çак таса вырăна, искусство алтарьне лекес тесен, номенклатура ятарласа хатĕрленĕ, пуриншĕн те пĕр виçеллĕ рамкăна вырнаçмалла, йĕп çăрти витĕр тухмалла, кампа мĕнле йăпăлтатмаллине, кампа мĕнле тонпа сăмахламаллине, кам алăкне хăш самантра пырса шаккамаллине тата ыттине те, тата ыттине те хытă пĕлсе тăмалла. Хĕрелнĕ сăмсапа çын умне ан курăн, ĕçлеме пултарайсан та ĕçе ан тух, пур пĕрех-прогул. Ĕçе тухмарăн пулсан та - приказ. Сан таланту, эсĕ пилĕк çыншăн та ĕçлеме пултарни номенклатурăна чĕрне хури чухлĕ те кирлĕ мар.

Çак сăмахсене çырса хутăм та, «Хыпар» хаçатра пичетленнĕ статьяри йĕркесем аса килчĕç:

«Валентин Урташа та, Александр Сергеева та паян ят сум кирлĕ мар. Сăвви-юрринчен сумлăрах палăк вĕсем валли никам та шухăшласа кăлараяс çук. Вĕсене талантне кура сумлани пире - чĕррисене - кирлĕ. Тăван чăваш культурине кирлĕ. Пурăннă чух сумне курмасан та, ĕмĕрлĕх ырă ят хăварнă вĕсем халăхра. Вĕсем текех ĕçсе-шавласа çӳрес çук ĕнтĕ. Сăвви-юррисене вара паян та юрлаççĕ Ыран та юрлĕç. Япăххи манăçать, лайăххи ĕмĕрлĕх юлать.

А.Калкăн аса илĕвĕнчен: «Валя мана пата килмессерен юрласа пама ыйтатчĕ, сĕрме купăс калаттаратчĕ. Шел, хам калаймастăп, -тетчĕ вăл, пиншакĕн пушă çаннине кăтартса. «Ăраскал» ятлă кĕнекине хăй вилес умĕн але пусса парнелерĕ:

Эс, пиччемçĕм, çитрĕн утмăла
Каччă-терĕш тейĕн утмăлта.
Тăванăм –Кăлкан, ут мала
Ĕçӳнте пулсамччĕ чи малта.

Эп те çыртăм, çыртăм юрăсем:
Эс вĕрентрĕн мар-и юрлама.
Юррăма иленнĕ хурăнсем
Туссене хушаççĕ юрлама.

Çук, çав, çук! Çитеймĕп утмăла
Тек-текех çӳреймĕп хăнара!
Утмаллаччĕ манăн, чупмалла
Юрату тупасшăн халăхра.

Пурăнас килетчĕ ман пиччем,
Курас кунăм катăлчĕ – куран.
Юбилей парни ман кĕнекем
Кĕнекеçĕм чĕрери суран.

Раккасси чăвашĕ Валентин Урташ.»

Чăваш халăх поэчĕ Геннадий Айхи каласа панинчен: «Сасси питĕ хитреччĕ, юрра ăстаччĕ. «Пĕлетĕп, сахал юлчĕ

пурӑнасси, питӗ пурӑнас килет те», - терӗ вӑл Патӑрьел таврашӗнче сӑвӑ каласа , юрӑ юрласа ҫӳренӗ чухне.

## Урташ

«Илтӗм витре, кайрӑм шыва
Килте шыв ҫуккипеле.
Витре ҫумне ларса йӗтӗм
Телейӗм ҫуккипеле».

Ҫак юрра Урташ юрлатчӗ
Тутарларан куҫарса.
Куҫҫулне туссем шӑлатчӗҫ
Пӗр-пӗринчен пытарса.

Эп «Валя» тесе чӗнеттӗм
Пиччене, тус пулнӑ май.
«Халӑх сӑвӑҫӗ-и:-теттӗм.-
Эс пуль вӑл, Валя-агай».

Вӑл-кӑшт куҫ хӗссе илетчӗ,
«Тӗмӗртеп-ха»,- тенӗ пек.
«Верлене вула-ха,-тетчӗ,-
Верлена саватӑп эп».

«Дуэтпа» час-часах юрлатчӗҫ
Урташпа Скворцов Юрка.
Пурнӑҫ -вӗҫсӗр туйӑнатчӗ,-
Кам пӗлес –пуласлӑха!

Пулнӑ «трио» та, «квартет» та,
Сыпкаланӑ тепӗр чух.
Тӳснӗ, савӑннӑ та чӑтнӑ,-
Халӗ, ак-пӗри те ҫук.

«Ай, ҫӳрерӗмӗр те мар-и
Патӑрьел хирӗпеле!

Щел-çке: юрă тăваймарăм
Çав аса илӳпеле...

Хурланса, халь асăнатăп
Эп Валян çак сăмахне.
Ĕнтĕ «Соло» эп юрлатăп
Вăл тахçан юрланине:

«Илтĕм витре, кайрăм шыва
Килте шыв çуккипеле.
Витре çумне ларса йĕтĕм
Теллейĕм çуккипеле...» (1976 ç.)

Чăваш халăх поэчĕ Юрий Сементер каланинчен: «...Çăмăл килмерĕ Аллă çула çитсе курмасăрах çĕре кĕнĕ поэтăмăрăн пурнăçĕ. Çамрăклах вăрçă вут-çулăмне чăмрĕ вăл, Тăван çĕршывăн паттăр та хăюллă салтакĕ пулнине кăтартса пачĕ, сумлă орден илчĕ, хаяр çапăçура сусăрланса юлчĕ. Анчах пуçне усмарĕ, нăйкăшмарĕ, вĕри чунĕпе поэзи хирне тухрĕ, янкăс юрă юрласа чăваш тĕнчи тавра вĕçсе çаврăнчĕ. Ан тив, пурнăç çитменнипе аслă пĕлӳ илес ĕмĕчĕ те тулайман пултăр, патшалăхăн хисеплĕ ятне те «тивĕçеймен» пултăр, Валентин Урташ паян – чăваш поэзийĕнчи чи сумлă та чи сăваплă ятсенчен пĕри, вăл чăваш çаврин чи асамлă çеммин вăртăнлăхне алла илнĕ, вăл влаçшăн çунас пахматсăр туйăмран çӳлĕрех тăнă, вăл хăйĕн кĕске ĕмĕрĕн кашни кунне тăван халăхпа тăван чĕлхе малашлăхĕшĕн панă,ялтан яла çӳре-çӳре, садран – сада вĕçе-вĕçе пурнăç юрри шăрантарнă. Çуркунне кайрĕ вăл, çурхи шăпчăк кĕвви пек ытарайми паха юрăсем хăварчĕ...».



В. Урташ (сулахайран виççĕмĕшĕ)
чăваш писателĕсем хушшинче

## Поэт ятне палăк

В.А. Урташ пурнăçĕпе пултарулăхĕ пирки нумай çырнă тееймĕн. Ытларах юбилей çулĕсене халалланисем. Н.С. Дедушкин, К.К. Петров, Р.А.Чепунов, Л.М. Волков, Ю.С. Семенов тĕпчевĕсем интереслĕ, ăш-пиллĕн çырнисем. Сайра пĕрре Урташран кулса е мăшкăлласа фельетон е тĕрленчĕк пичетленисем тĕл пулаççĕ. Вăхăтне кура социализмла реализм меслет вĕрентĕвĕпе тĕревленсе калавĕсене е сăввисене, поэмисене критиклесе çырнисем те пур. Акă «Чăваш коммуни» хаçатăн 1946 çулхи 137-мĕш номерĕнче «Икĕ калав çинчен» статья пичетленнĕ. Унта Валентин Урташăн 1946 çулта «Ялав» журналта кун курнă «Кĕрӳшĕ» калава тишкерсе тухса çапла çырнă: «...автор пурнăçа сăнама пĕлни нимĕн чухлĕ те курăнмасть. Хăш-пĕр примерсене илсе кăтартăпăр...». Статьяра кукăрлă-макăрлă тĕслĕхсем илсе кăтартнă та малалла çапла каланă: «Паллах, В.Урташ хăй çыракан япаласене тишкерме пĕлнĕ пулсан, ун пек çитменлĕхсем пулман пулĕччĕç. Тишкерме, таврари пурнăçа тĕрĕс ăнланса илме питех те тăрăшса вĕренмелле. Çакна тума пире марксизм-ленинизм теорине

вёренни пулăшать. Вăл çеç обществăра пулакан улшăнусене, çынсем хушшинчи хутшăнусене, çав хутшăнусем хăшĕсем пĕтсе, аталанса пырса, социализмла обществăшăн паллă пулса тăнине тĕрĕс ăнланма пулăшать».

Çакăн пек статьясем Урташ пултарулăхĕн çутă енĕсене кăшт та тĕксĕмлетеймеççĕ, авторсен пĕтĕмлетĕвĕсем историшĕн пĕртте юрăхлă пулаймарĕç.

В. Урташ пурнăçĕпе пултарулăхне ăш-пиллĕн çутатакан тĕслĕхсенчен чи малтан Чăваш телевиденийĕ 70-мĕш çулсенче сенкер экран çине кăларнă «Ăраскал» ятлă киноочерка асăнмалла. Çĕкленўллĕ передача пулчĕ вăл. Урташ пултарулăхĕн чи асамлă енĕсене кăтартма пултарнăччĕ очерк авторĕсем. Тележурналистикăри чи ăнăçлă ĕçсенчен пĕри тесе сценари авторĕсене П. Крысинпа А. Константинова Çемен Элкер ячĕллĕ премипе палăртнăччĕ. Ун чухне телевидени техника енĕпе пуянах пулман та, пурпĕрех çакă сисĕнсех каймастчĕ. Сăвăсене вулакан Н. Григорьева артистка поэт пултарулăхне илемлĕн кăтартнăччĕ.

1995 çулта çу уйăхĕнче Аслă Çĕнтерў Кунĕ умĕн сенкер экран çине поэта халаллані тепĕр очерк - «Укăлча умĕнче» ятпа - тухрĕ. Вăл тăвата кăларăмран тăракан ярăм пулчĕ.

«Укăлча умĕнче» юрă фонĕнче (З. Андреева юрлать) «Сана юратрăм» сăвă йĕркисем чĕрене хумхантараççĕ:

Тăван çĕршыв, сана юратрăм
Мĕн пĕчĕкрен, мĕн ачаран.
Пĕр саншăн çеç юрра шăратрăм
Чун савнăран, чун туртнăран.

Валентин Урташ пултарулăхĕ сăвă-юрăпа тулăх. Передачăсене хатĕрлекенсем çакна шута илсе сюжет йĕркеленĕ те. «Юрăпа» юрă янăрать. Юрăçи (О. Орлов) сăвăри Урташлăха лайăх палăртать - калăн: Урташ хăй юрлать. Унтан писатель аса илĕвĕ, сăвă е юрă, каллех писатель аса илĕвĕ - калаçăвĕ, сăвă е юрă. Çакăн пек йĕркеленĕ сюжет йĕрĕ икĕ хутчен çеç улшăнса илчĕ (А. Сергеев композитор аса илĕвĕпе Т. Чумакова юрăç калаçăвĕ).

В. Урташ... Çынни пирки калаçман мар, çырман та мар. Пурпĕрех вĕçне çитермен пек, çитерейменĕпĕр те. Вăхăт шунăçемĕн поэт пултарулăхĕ тĕпсĕр çăлкуç пек - шухăшлаттарать, калаçтарать те калаçтарать. «Халăх хăй сăвăçине питĕ лайăх сисет, туять, çавăнпа манмасть те. Урташ, чăнах та, халăх сăвăçи. Халăх шăпи, çĕршыв шăпи унăн шăпи пулнă» (Хв. Агивер).

Передачăра калаçакансен шухăшĕ çапла: В. Урташ вăрçăн асапне чăтмалла мар ытлашшипех курнă пулин те, хуçăлса ӳкмен. Çиелтен пăхсан, «шавлă, савăнăçлă», шалтан вара «шухăшлă, туйăмлă». Хăйне кӳрентерсен вăрттăн çеç, çын курасран, хурланса йĕретчĕ» (В. Игнатьев).

«Мана хăй чунĕ мĕнле хурланнине уçса кăтартрĕ. Илемсĕр, çынсене хăратаканни тесе урăлтаркăçа илсе кайса хупнă иккен ăна, хĕнесе пĕтернĕ. Поэт шалтан татăлса йĕнĕ пек туйăнчĕ» (Г. Айхи).

Илемсĕр поэт «Мана вăл питĕ хитрен курăнчĕ» (Г.Айхи) вун çиччĕ тултаричченех, виçĕ уйăх маларах фашистсемпе çапăçма хăй ирĕкĕпе тухса кайнă. (Передачăра кун пирки, темшĕн, çиелереххĕн асăнчĕç). Илеме сыхласа хăварас тесе паттăрлăх кăтартса тăшманпа çапăçнă, йывăр аманнă, ĕмĕрлĕх ех чăлах-«илемсĕр» тăрса юлнă.

«Урташа курсан тĕлĕнсех кайрăм. «Молотилка витĕр тухнă кĕлте пекех туйăнатăн эс мана», - терĕм хăйне (Хв. Уяр). Апла пулин те, Урташ еплерех çепĕç лирик: «Шурă юр», «Пĕрре курсах саврăм ши», «Ах, мĕн-ма», «Шур акăшĕ, ай, пулăттăм», «Кĕмĕл çĕрĕ», «Укăлча умĕнче», «Тавах, анне», «Шупашкар хĕрĕсем», «Ма хитре-ши Шупашкар урамĕ», «Мĕншĕнех-ши?» юрăсем.

Тепĕр Урташа та куратпăр: «Валентин пасара кайса махорка, çăмарта, ытти вак-тĕвек сутатчĕ. Кăшт та пулин укçа тăвасшăнччĕ». «Анне валли», - тетчĕ хăй пĕрмай» (Хв. Уяр).

«Валентин Андреевич, кăштах укçа пулмĕ-ши санăн?

- Мĕн чухлĕ?

- Пĕр виçĕ тенкĕ пулсан юратчĕ.

- Ме, пилĕк тенкĕ, эпĕ пенси илнĕ» (Хв. Агивер).

«Мана шеллесе пуль ĕнтĕ, çĕлĕк парнелерĕ. Чылайччен тăхăнса çӳрерĕм ăна» (В. Игнатьев).

Çапла пулнă Урташ. Пур пулсан - çурмалла, çук пулсан - пĕрле.

«Урташăн ун чухне пурăнма хăваттерĕ те çукчĕ. Ялтан яла çӳретчĕ. Сăвă каласа, юрă юрласа» (Г. Айхи).

Акă куç умне тепĕр Урташ тухать. Юрăç. Çук, çук, сăввисене хăюллăн, кăшкăрарах, Есенин пек (фонотекăра сыхланса юлнă Урташ сассиллĕ пленкăсем çакна çирĕплетеççĕ) «халăха куç пăвнă пек итлеттерсе» (В. Игнатьев) каланипе çеç мар, чунĕпе чăн-чăн юрăç пулнипе - юрăç.

«Мана вăл «Укăлча умĕнче» юрă мĕнле çыраннине каласа панăччĕ. Пĕррехинче пĕр ялта сăвăça кĕтсе мунча хутса пултарнă. Ларать хайхи лапка çинче. Алăкне уçса хунă. Аякра та мар пĕччен хурăна асăрхать. Турачĕсене уснă та теме кĕтнĕн, питĕ тунсăхлăн курăнать. Урташăн пуçĕнче те мар, чунĕнче кĕвĕсем шăранса тухаççĕ. Çырма хучĕ çук, кĕвĕле-кĕвĕле, сăвăла-сăвăла мунчаран тухать те кил хуçисене каласа-юрласа кăтартать. Кайран Г.Хирпӳне пĕлтерет. Композитор Урташ сăввине çав кĕввех йĕркелесе çитерет» (Г. Айхи).

«Сăвви унăн çырăнмастчĕ - хывăнатчĕ. Урай тăрăх калле-малле уткаласа çӳретчĕ те сăвăласа та хуратчĕ е юрласа яратчĕ» (П. Львов).

«Эпĕ кĕвĕ каласа патăм, Валентин Андреевич калле-малле уткаларĕ те Шупашкар хĕрĕсем çинчен çырмалла терĕ. Çапла çыранчĕ «Шупашкар хĕрĕсем» юрă» (А. Сергеев).

«В. Урташ писательсене «Юрланман сăвăсем ан çырăрха, терĕ.

Хваттере юсанă чухне радио В.А. Урташ вилни çинчен пĕлтерчĕ. Юсавçă хĕрсем питĕ хурланчĕç вара. «Кам ĕнтĕ чăвашсем валли хитре юрăсем çырĕ?», - терĕç вĕсем (Т. Чумакова).

Сăнсем хыççăн сăнсем. Калаçу хыççăн калаçу. Сăвă хыççăн сăвă. Юрă хыççăн юрă. Çакă палăрчĕ: «В. Урташ чăннипех те халăх поэчĕ ятне тивĕç» (П. Львов, Г. Ефимов, В. Игнатьев). Ячĕ вăл хут çинче, хисепĕ - халăхра.

«Укӑлча умӗнче» передачӑсен ярӑмӗ пӗтӗмпе 140 минута яхӑн пырать. Чӑваш телевиденийӗшӗн самаях пысӑк вӑхӑт ку (эпӗ тепӗр писатель пирки ҫакӑн пек вӑрӑм передача пурине пӗлместӗп). Урташ пултарулӑхне уҫса кӑтартма тата темиҫе сехет те ҫитеймӗ.

В. Урташ сӑвӑҫ-юрӑҫ пулнине палӑртса пӗр тӗвве пуҫтарнӑ передачӑсенче куҫа курӑнакан сулӑнчӑксем те ҫук мар. Тен, мана поэт пултарулӑхне лайӑх пӗлекене, вӗсем сулмаклӑн та курӑнчӗҫ. Камсем калаҫҫӗ-ха Урташ ҫинчен? Ӑна пӗлекенсем, юлташӗсем. Вӗсене «Эсир Урташа пӗлетӗр-и? Ун ҫинчен мӗн те пулин калаятӑр-и?» тесе пухнӑн туйӑнчӗ. Поэтӑн янташӗсем К.К. Петров, В. Чебоксаров, Валем Ахун ҫыравҫӑ пултарулӑхне лайӑхрах уҫса кӑтартма пултаратчӗҫ, передачӑна ӳкернӗ чухне Н.С. Дедушкин, Н. Петровская пурӑннӑ-ха, вӗсен каламалли, аса илмелли пулнах ӗнтӗ. Вӗсем Урташа ҫывӑх пӗлнӗ. Шупашкар районӗнче Р.А. Чепунов пурӑнать, вӑл та Урташ янташех, Элшел ҫынни. Поэт пултарулӑхӗ ҫинчен чи малтан тӗпчев статйисем ҫырнӑ. Чӑваш патшалӑх университетӗнче ӗҫлекен Г. Хлебников тӗпчевҫӗ Урташа лайӑх пӗлет, унӑн асӑрхаттармалли, каласа памалли чылаях.

В. Урташӑн сӑн ӳкерчӗкӗсем сахалли (передачӑра икӗ хутчен ҫеҫ курӑнчӗҫ вӗсем) пирки каларӗҫ. Ку тӗрӗсех мар. Вӗсем чылаях. Сӑн ӳкерчӗксен ярӑмне курма ӗмӗтленнӗччӗ. Хветӗр Агивер В. Урташ С. Михалковӑн пьесине чӑвашла куҫарни пирки каларӗ. Вырӑссен паллӑ писателӗпе ӳкерӗннӗ фото сӑн та пур поэт архивӗнче (Чӑваш Гуманитари Институчӗн архивӗ, Урташ фончӗ).

Передачӑра поэтӑн пурнӑҫӗ - ҫемье, хваттер, ресторан, апат-ҫимӗҫ - пирки каланисем ытлашшипех пулчӗҫ. Калаканнисене кӳрентерес мар тесе-ши, ҫав кадрсене касса пӑрахма иккӗлленнӗ, курӑнать. П. Львов калаҫнӑ самант икӗ хутчен ҫаврӑнчӗ - режиссерпа калӑплакан асӑрхаса ӗлкӗрейменни ӗнтӗ ку, е алӑран кайтӑр тенӗ-ши?

«Укӑлча умӗнче» передачӑсен ярӑмӗ пирки Р. Чепунов «Хыпар» хаҫатра самаях пысӑк статья кӑларчӗ. Вӑл кӑларӑм хӑйне тивӗҫтерменнине, килӗшменнине палӑртнӑ.

Журналистпа килĕшмелле; анчах телеочерк пĕтĕмпех пăрахăҫа тухмалла мар, якатса ҫитерсен, поэт пултарулăхне кăтартма тĕпчевҫĕсемпе янташĕсен хаклавĕсене кĕртсен вăл Урташ ячĕпе чăн палăках пулĕччĕ.

1990 ҫулта Шупашкар хулинче К. Маркс урамĕнчи 62-мĕш ҫурт ҫине Асăну хăми ҫапаҫҫĕ. Унта ҫапла ҫырнă: «Ҫак ҫуртра 1963 - 1973 ҫулсенче чăвашсен паллă юрăсăвăҫи Валентин Андреевич Урдаш пурăннă». В.А. Урташ пирки Ф. Лукин композитор нумай ырă сăмах каланă. В. Энтип, Ю. Сементер, П. Ялкир поэта аса илсе пултарулăх ҫулĕсене ăшшăн хакланă. Ҫуртри поэт хваттерĕ пысăках мар, пĕр пӳлĕмлĕ. Вăл та Урташшăн хаклă пулнă, кунта унăн чылай сăвви юрра ҫаврăннă. Шел, хăй вилсен мăшăрĕ пулнă хĕрарăм ал ҫырусене, сăн ӳкерчĕксене тирпейлĕ упрама пĕлеймен. Хăшĕ-пĕрисене палланă-палламан ҫынсенех тыттарса янă, теприсене кăларса пăрахнă.

1994 ҫулта В.А. Урташ ҫуралнăранпа 70 ҫул ҫитнĕ май поэт вĕреннĕ шкулта Элшел ялĕнче Асăну хăми ҫакма май килчĕ. Унта ҫапла ҫырнă: «Чăвашсен паллă сăвăҫ-юрăҫи, вăрҫă паттăрĕ В.А. Урташ Элшел шкулĕнче 1936-1941 ҫулсенче вĕреннĕ». Элшелсем юратнă поэтне ырăпа асăнса пурăнаҫҫĕ, кашни ҫулах раштавăн 20-мĕшĕнче литература уявĕсем ирттереҫҫĕ. Тăван ялĕнче те Урташа манмаҫҫĕ. Раккассисемшĕн вăл ҫывăх, хаклă ят.

В. Урташ пултарулăхĕ пирки хаҫат-журналсенче ҫырсах тăраҫҫĕ. «Халăх шкулĕ» журнал поэт пултарулăхне шкулта вĕрентесси пирки урок-сценари пичетлерĕ, «Сувар», Пăва районĕнчи «Ялав» хаҫатсем те час-часах статьясем, тĕрленчĕксем кăлараҫҫĕ. Мана Пӳркел ялĕнче пурăнакан Анатолий Малышев поэт ҫырнă «Илеймен автограф» поэма питĕ килĕшрĕ, унта маншăн ҫĕнĕлле ăнланмаллисем палăрчĕҫ.

«Ялав» журнал хăйĕн 2004 ҫулхи 3-мĕш номĕрĕнче Владимир Чебоксаровăн «Хунав ӳсет тымартан» ятлă статйине пичетлерĕ. Урташ ентешĕ, Элшел чăвашĕ, паллă писатель хăйне литература ҫулĕ ҫине тăма хавхалантарнă поэта ăш-пиллĕн аса илсе: «Вăраннă-вăранман урамсем тăрăх Чăнлă шывĕн сулахай енчи ҫаранне («Ҫĕнĕ Шур»

теççĕ ăна пирĕн ялсем) пырса тухрăмăр. Умра – кĕрхи сăн çапнă тӳремлĕх, Раккасси, Урташ кун курнă ял. Инçе те мар пек, темиçе утăм кăна туйăнать унта çитмешкĕн. Анчах ултав ку – тӳремлĕх арпаштарать куçа. Чăннипе вара ялпа ял хушши – виçĕ çухрăм. Пĕлетĕп, çаранри çул-йĕре Валентин Урташ та мĕн пĕчĕкрен такăрлатнă. Çак çаран урлах пирĕн ял шкулне çӳренĕ, вутлă вăрçа та çак çаран урлах çул тупнă, аманнă чун-халпа та çак çаранах йĕнерлерĕ пуç усма хăнăхман ентешĕм» тесе çырса Тăхăръял çĕрĕ-шывне куç умне кăларать. Тăхăръял пилĕ Урташа çеç мар, ытти чылай янташăмăра – И. Юркина, Тайăр Тимккине, А. Кăлкана, К.Петрова, Н. Петровскаяна, Н. Симунова тата ыттисене те – чĕкеç чĕлхи парнеленĕ, сăвă-калав тĕнчинче ярăнса ишмелĕх вăй-хал сипетленĕ.

Шкул программи В. Урташ пултарулăхне манмасть. Шел, хăй пурăннă чухне вăл çак хисепе курайман. 1986 çулччен шкул кĕнекисенчен 6-мĕш класс валли кăларнинче çеç «Литература юррисем» пайра Урташăн хайлавĕсене вуласа вĕренме кĕртнĕччĕ. Программа улшăннă май 6-мĕш класс кĕнекинче поэт сăввисене вырăн паман. 8-мĕш класс валли хатĕрленĕ учебник-хрестоматире «Пурăнас килет» поэмăна кĕскетмесĕрех вуласа тишкерме палăртнă. Кĕнекен форзац страницинче «Тăван çĕршыв» ятлă сăввине пичетленĕ. Çĕнĕ программăпа килĕшӳллĕн кăларнă 11-мĕш кĕнекинче те Урташăн «Сана юратрăм», «Тавах, анне», «Укăлча умĕнче», «Калаймарăм» сăввисем пур.

«Чăваш чĕлхи» учебниксенче В. Урташ çырнă сăвăсене тĕслĕх вырăнне кĕртнине тĕл пулатăн.

В.А. Урташăн пĕр калавсен кĕнеки, тăхăр сăвăсен кĕнеки пичетленсе тухнă. Юлашкине, «Ĕмĕтĕмĕр çитсе пынăран» ятлине, поэт çуралнăранпа 60 çул çитнине халалласа кăларнăранпа чылай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ. Чи лайăх хайлавĕсене пĕр кĕнекене пĕрлештерсе вулакансем патне çитерни поэт ятнех палăк пулĕччĕ.

## Пуç тай сăмахĕ

Нумаях пурăнайман Валентин Андреевич Урташ. 1973 çулхи апрелĕн 18-мĕшĕнче унăн харсăр чĕри тапма чарăннă. Талантлă сăвăç-юрăç 49 çула та çитеймен. Вăрçăн асаплă суранĕсем мĕн виличченех канăç паман поэта. Хăйĕн сывлăхне упрама тăрăшманни те пулнă-тăр. Апла пулин те, Урташ ячĕ пурăнать.Вăл çырса хăварнисене халăх манмасть. Поэт ячĕ, унăн пултарулăхĕ чăваш литературинче классиксен эткерлĕхĕсемпе юнашар тăрать.

Кĕникисем нумаях мар Урташăн, пурĕ те 10 çеç. Пĕчĕк, тăпăл-тăпăл кĕнекесем. Вĕсене «Ăраскал» киноочеркра каланă пек «кашни сăмахĕ - хăй ахах, кашни йĕркийĕ - хăй ахах» тесе пахалама пулать.

Çăмăл пулман В.Урташăн литературăри çулĕ. Пултарулăхĕ те пĕр тикĕс аталанса пыман. СССР писателĕсен Союзĕн членĕн ятне 8 кĕнеке пичетлесе, халăхра анлă сарăлнă паллă юрăсен авторĕ пулса 1971 çулта çеç илнĕ вăл. 29 çул хушши хаçат-журналсенче пичетленсе, кĕнекесем кăларса 3 çул çеç писатель ятне илтсе пурăнать Урташ. Апла пулин те литературăшăн ырми-канми тăрăшса мĕн юлашки кунĕччененех сăвă хыççăн сăвă шăрçаланă вăл. «Ăраскал» ятлă кăнекине те 1973 çулта йывăр чирлесе выртнă чухне пичете хатĕрлесе çитерет.

«Ăраскал» вăл - шăпа. Çын хăйĕн тивĕçне халăх умĕнче мĕнле пурнăçланине кура ăраскаллă теме пулать», - çапла çырать В.Урташ «Ăраскал» ятлă сăвă ум сăмахĕнче. Хăйĕн пирки çырнă тейĕн. Шăпине халăх кун çулĕпе тачă çыхăнтарса нумай сăвă-юрă, калав, очерк шарçаларĕ вăл. Çавăнпа телейлĕ - ăраскаллă пулчĕ.

## ВАЛЕНТИН УРТАШĂН КĔНЕКИСЕМ

1. Çурхи кунсем. Калавсем. 1951.
2. Чун савнăран. Сăвăсем. 1958.
3. Саншăнах юрлатăп. Сăвăсемпе юрăсем. 1960.
4. Пĕчĕк Роза. Поэма-очерк. 1964.
5. Аслă йыш. Сăвăсемпе поэмăсем. 1966.
6. Сăрă хурт. Сатирăлла сăвăсем. 1969.
7. Пурăнас килет. Сăвăсемпе поэмăсем. 1969.
8. Тухăçран хăпарсан шурăмпуç. 1972.
9. Ăраскал. Суйласа илнĕ сăвăсемпе поэмăсем. 1974.
10. Ĕмĕтĕмĕр çитсе пынăран. Сăвăсемпе поэмăсем. 1983.
11. Ваттисен ячĕпе. 1959. (Антун Мучи ятпа кăларнă)

## ВАЛЕНТИН УРТАШ КУÇАРĂВĔСЕМ

1. Каверин В.А. «Икĕ капитан»» повесть, 2т., 1951.
2. Стифен Микан. Çĕр процентлă американец. Ялав, 1972, №8
3. Манасыпов Алмаз. Кил ман пата. Ялав, 1972, №11
4. Мусатов А. Стоксар. 1951.
5. Чанг Тим. Савнипе калаçни. Ялав, 1968, №5
6. Михалков Сергей. Сомбреро.
7. Первенцев А. Чыса çамрăкран упра.

## ЛИТЕРАТУРА КĂТАРТМĂШĔ

1. Яковлев И.Я. Воспоминания. Ч. - 1982.

2. Анастасин А.А. Яковлев çинчен аса илнисем. ЧПГĂИ, 11, 627.

3. ЧПГĂИ архивĕ, У - 860, 16.

4. ЧПГĂИ архивĕ, У - 856, 16.

5. ЧПГĂИ архивĕ, 685.

6. Чепунов Р. Урдаш сăввисем. Тăван Атăл, 1974, 12 №.

7. Илюхин Ю. Григорий Хирбю. Ч. - 1985, стр.

8. Львов П. Пирĕн самана юрăçи. Коммунизм ялавĕ 1974, декабрĕн 20.

9. Дедушкин Н. Пурнăçа юратса, пурнăçа мухтаса. Ялав, 1974, 12 №.

10. Есенин С. Шурăмпуç çăлтăрĕ. Ш. - 1975, 36 стр.

11. Юрьев М. Çунатланнă вăйпа. Тăван Атăл, 1972, 12 №.

12. Чăваш совет литератури. Ш. - 1972.

13. Тимофеев А. Ялав, 1969, 12 №.

14. Васильев А. статйи. Чувашский язык, литература и фольклор, 1972, 1 вып., 468.

15. Семенов Ю. Çĕршывăн хастар ачисем. Ш. - 1976, 64 стр.

16. Ефимов Г. Юрăра çĕршыв кунçулĕ курăнса тăтăр. Ялав, 1968, 6 №.

17. Артемьев А. Пурнăç чăнлăхĕпе писатель ăсталăхĕ. Ш. - 1984, 102 стр.

18. Малов А. Çутă чунлă талант. Тăван Атăл, 1974, 12 №.

19. Новиков А. Калавсем çинчен. Ялав, 1948, 5 №.

20. Алендей Г. Икĕ калав çинчен. Чăваш коммуни, 1946, июлĕн 10.

21.Малов А. Янкăр тăрă çăлкуç пек. Коммунизм ялавĕ, 1984, декабрĕн 20-мĕшĕ.

22. Матвеев Г.В. Урдаш гастролĕсем. Коммунизм ялавĕ, 1953.

23. Михайлов И. Поэт ăраскалĕ. Коммунизм ялавĕ, 1978, январĕн 14.

24. Николаев А. Пурнăç юрату. Коммунизм ялавĕ, 1971, июлĕн 22.

25. Прокопьев В. Хумхантаракан сăвăсем. Коммунизм ялавĕ, 1967, апрелĕн 5.

26. Сергеев А. Юрă çурални. Коммунизм ялавĕ, 1980, ноябрĕн 1.

27. Илюхин Ю. Памяти павших героев. Советская Чувашия, 1972, январĕн 23.

28. В. Урдаш. Некролог. Советская Чувашия, 1973, апрелĕн 19; Коммунизм ялавĕ, апрелĕн 19.

29. Чăваш поэчĕ. Некролог. Тăван Атăл, 1973, 6 №, 80 стр.; Ялав, 1973, 5 №.

30. Долгов В. Ĕмĕр юррине юрлас тесен... Ялав, 1961, 9 №.

31. Тимофеев А. Сăрă хурт çинчен. Ялав, 1969, 12 №.

32. Юнгеров Н. Тăхăръял шăпчăкĕ. Пионер сасси, 1974, декабрĕн 28.

## Тупмалли

Пултарупа хавхалану çăлкуçĕ........................................ 5
В.Урташ автобиографийĕ............................................... 6
Урташ ăраскалĕ................................................................ 8
Урташ-салтак сăнарĕ – Урташ сăввисенче.......................... 17
Юрату сăввисем.............................................................. 26
Пурăнас килет................................................................. 32
Урташăн сăвă тĕнчи......................................................... 39
Урташ калавĕсем............................................................ 49
Урташ синкерĕ................................................................ 54
Поэт ятне палăк.............................................................. 62
Пуç тай сăмахĕ............................................................... 69
Валентин Урташăн кĕнекисем.......................................... 70
Валентин Урташ куçарăвĕсем.......................................... 70
Литература кăтартмăшĕ................................................... 71

Василий Егорович Цыфаркин

# Юрӑпа
# эп
# пурнӑҫа
# юратрӑм

В.А.Урташ
пурнӑҫӗпе пултарулӑхӗ

Художественный редактор *А.А. Трофимов*
Оригинал-макет *Е.В. Сергеевой*

Подписано к печати 21.12.07.
Формат $60x90^{1}/_{16}$
Бумага универсал. Печать ризограф.
Усл. печ. л. 4,6.
Заказ № 41. Тираж 100.

Чувашский государственный институт
гуманитраных наук

428015, г. Чебоксары, Московский пр., д. 29, корп. 1.

15$^{2}$